чăваш халăх хаçачĕ

# ХЫПАР

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă

ШĂМАТ КУН
2014, çу /май/ 24

94-95 /26500-26501/ № №

Хакĕ ирĕклĕ

WWW.hypar.ru

## Саламлатăп!

**Чăваш Енĕн хисеплĕ предпринимателĕсем!**

Сире професси уявĕ ячĕпе саламлатăп!

Бизнес-пĕрлĕх пирĕн республикăн социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕн куçăм вăйĕ пулса тăрать. Предпринимательсен хастарлăхне пула çĕнĕ производствăсем хута каяççĕ, çĕнĕ ĕç вырăнĕсем çуралаççĕ, инноваци технологийĕсемпе управлени меслечĕсем пурнăçа кĕреççĕ, туса кăларакан продукци тата пулăшу ĕçĕсен ассортименчĕ анлăланать, вĕсен пахалăхĕ лайăхланать.

Чăваш Республикинче предпринимательсен пуçарулăхне хавхалантарас, бизнеса аталантарма меллĕ условисем йĕркелес тĕллевлĕ тухăçлă политика тытса пыратпăр.

Патшалăх пĕчĕк тата вăтам предпринимательлĕх субъекчĕсене финанс, пурлăх, йĕркелӳ, консультаци, право енĕпе пулăшать. Пĕчĕк тата вăтам предпринимательлĕх субъекчĕсем валли инжиниринг центрĕ, çамрăксен инноваци пултарулăхĕн центрне, бизнес-инкубаторсем йĕркеленĕ. Шупашкар хулинче промышленноç /индустри/ паркĕ çĕкленет. Пĕчĕк тата вăтам предпринимательлĕх субъекчĕсене патшалăх енчен пулăшма уйăрнă укçан пĕтĕмĕшле калăпăшĕ юлашки виçĕ çулта 1,1 млрд тенкĕпе танлашнă. Çавна май 2013 çулта кăна 2,3 пин ытла ĕç вырăнĕ йĕркеленĕ, 11 пин ĕç вырăнне упраса хăварнă!

Саккунсен никĕсĕ çирĕпленет, административлă чăрмавсене сиретпĕр, Чăваш Республикин Предпринимательсен прависене хӳтĕлекен уполномоченнăйĕн институтне туса хунă, патшалăх наградисен списокне çĕннине кĕртнĕ – «Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ предпринимателĕ». Влаç органĕсен тата омбудсмен институчĕн тĕллевĕ – çамрăк, пуçаруллă çынсене хăйсен пултарулăхĕпе усă курмалли условисемпе тивĕçтересси.

Пирĕн бизнес-пĕрлĕх Чăваш Ен экономикин аталанăвне, унăн инвестици илĕртӳлĕхне çĕклес, республикăра пурăнакансем социаллă пурнăç енĕпе хăйсене лайăхрах туяссине тивĕçтерес ĕçе малашне те курăмлă тӳпе хывасси пирки иккĕленместĕп.

Сире чун-чĕререн çирĕп сывлăх, çĕнĕ проектсене ăнăçлă пурнăçлама, телей тата ырлăх сунатăп!

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М.ИГНАТЬЕВ.**

*Уяв*

# Юлашки шăнкăрав – çĕнĕ пурнăç пуçламăшĕ




*Çу уйăхĕн 23-24-мĕшĕсенче Чăваш Енре, Раççейĕн ытти кĕтесĕнчи пекех, шкул пĕтерекенсемшĕн юлашки шăнкăрав янăрарĕ, çавна май вĕренӳ заведенийĕсенче савăнăçлă мероприятисем иртрĕç. Кăçал пирĕн республикăра 6,6 пин ача 11-мĕш класран, 11,8 пинĕ 9-мĕшĕнчен вĕренсе тухаççĕ.*

Ĕнер Шупашкарти пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан 2-мĕш вăтам шкулта та юлашки шăнкăрав янăрарĕ. Паллă çак пулăма халалланă мероприятие ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕ Иван Моторин, ЧР вĕренӳпе çамрăксен политикин министрĕ Владимир Иванов, Мускав район администрацийĕн пуçлăхĕ Андрей Петров, Шупашкар хула Пухăвĕн депутачĕ Юрий Симунов хутшăнчĕç.

Иван Моторин шкул вĕренсе пĕтерекенсене саламланă май экзаменсене лайăх тытма, хăйсене килĕшекен институт-университетăн студенчĕсен йышне кĕме ăнăçу сунчĕ. Пурнăçăн аслă çулĕ çине тухма хатĕрленекенсем тăван шкула, учительсене яланах асра тытасса тата юратасса шаннине пĕлтерчĕ. "Эсир – пирĕн пуласлăх", – терĕ премьер-министр.

Шкул директорĕ Марина Михалёва педагогика канашĕн йышăнăвĕпе 11-мĕш класс пĕтерекен пĕтĕм çамрăка – 38-шне те – пĕтĕмлетӳ аттестацийĕ витĕр тухма ирĕк панине пĕлтерчĕ. Вăл çавăн пекех Шупашкар хула пуçлăхĕн Леонид Черкесовăн саламне вуласа пачĕ: "Юлашки шăнкăрав – сирĕн пурнăçри пĕлтерĕшлĕ пулăм. Эсир аслă çул çине тăма хатĕрленетĕр, вăл çĕнĕ шанчăкпа тата çитĕнӳсемпе пуян. Вăл сире ĕмĕт-тĕллевĕре пурнăçа кĕртме май патăр".

2 стр.

# Çу уйăхĕн 30-мĕшĕччен йӳнĕрехпе çырăнтараççĕ

"Хыпар" Издательство çурчĕн хаçачĕсемпе журналĕсене 2014 çулăн иккĕмĕш çурри валли почта уйрăмĕсенче çу уйăхĕн 30-мĕшĕччен йӳнĕрех хакпа çырăнтараççĕ. Шел те, почта хăйĕн хакне пĕчĕклетмерĕ, анчах яллă вырăнта пурăнакансене "Хыпар" хаçат çырăннăшăн пĕр кĕленче тип çу парса хавхалантарать.

Çу уйăхĕн 30-мĕшĕ хыççăн хаçат-журнал хакĕсем мĕнле пуласси не таблицăра кăтартнă.

Çакна шанатпăр: почта тытăмĕн Мускаври ертӳçисем хаçат-журнал çырăнмалли хаксене самаях пысăклатрĕç пулин те пирĕн тусăмăрсем, чăвашсем, юратнă кăларăмĕсенчен писмеççех, чун çимĕçне çырăнса илеççех. Лайăхрах тĕшмĕртсен, хаçат е журнал çур çулта миçе номер тухнине тĕпе хурсан хаксем капашсăр темеллех мар. Калăпăр, "Хыпара" çырăнмалли хака, 744 тенкĕ те 12 пуса, 125 çине /вулакан патне çур çулта çакăн чухлĕ пырса тăрать/ пайласан "Хыпар" хаçатăн пĕр номерĕ пĕтĕмпе те 6 тенке яхăн çеç тăрать.

Куллен тухакан "Хыпара" çырăнма укçа-тенкĕ çитместех пулсан "Хыпар - шăмат куна" суйласа илĕр. Вăл чылай йӳнĕрех. Çемье бюджетне тата та перекетлес текенсене, район центрĕсенче пурăнакансене, пирĕн хаçатсене, журналсене "Чăваш пичечĕн" киоскĕсенче çырăнма сĕнетпĕр.

**Кĕске справка**

*"Хыпар" хаçатăн каталог хакĕ /редакцие кĕрекен укçа/ 6 уйăха – 144 тенкĕ, çырăнтару хакĕ – 744 тенкĕ те 12 пус. 600 тенкĕ почтăна кайнине вулакан тавçăрса илчĕ пулĕ.*

| Кăларăмсем | Çырăнтару хакĕсем | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| | Почта уйрăмĕсенче | | «Чăваш пичет» киоскĕсенче | «Советская Чувашия» киоскĕсенче | Редакцире |
| | акци вăхăтĕнче | акци хыççăн | | | |
| Хыпар | 715-32 | 744-12 | 279 | 279 | 144 |
| Хыпар-шăмат кун | 303-96 | 321-96 | 141 | 141 | 90 |
| Çамрăксен хаçачĕ | 347-16 | 375-96 | 231 | 231 | 144 |
| Чăваш хĕрарăмĕ | 312-24 | 340-44 | 213 | 213 | 141 |
| Сывлăх | 199-20 | 215-40 | 111 | 111 | 81 |
| Кил-çурт, хушма хуçалăх | 176-46 | 192-66 | 111 | 111 | 81 |
| Хресчен сасси | 356-28 | 379-08 | 162 | 162 | 114 |
| Хресчен сасси – Кил | 176-46 | 192-66 | 105 | 105 | 81 |
| Тăван Атăл | 279-48 | 319-08 | 246 | 246 | 198 |
| Капкăн | 163-44 | 185-04 | 144 | 126 | 108 |
| ЛИК (Литература. Искусство. Культура) | 120-36 | 140-36 | 120 | 120 | 100 |
| Вести Чувашии | 282-12 | 310-92 | 186 | 186 | 144 |
| Собрание законодательства Чувашской Республики | 629-58 | 743-58 | 660 | 660 | 570 |
| Тантăш | 271-44 | 289-44 | 132 | 132 | 90 |
| Самант | 157-02 | 181-02 | 156 | 156 | 120 |
| Тетте | 125-52 | 143-52 | 111 | 111 | 90 |

# Юлашки шăнкăрав – çĕнĕ пурнăç пуçламăшĕ



/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.

/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.

11 "А"- тата 11 "Б"-мĕш классен ертÿçисем Галина Самсоновăпа Людмила Ирукова хăйсен вĕренекенĕсене саламланă май куççулĕсене пытараймарĕç: 7 çул хушшинче куллен тенĕ пек куракан ачасем çывăхран та çывăх, тăванран та тăван пулса тăраççĕ-çке. Шкул форми тăхăннă, шурă саппун çакнă, хăю çыхнă хĕрсен те сăвă вуланă тата юрă шăрантарнă май куçĕсем шывланчĕç: вĕсем тăван шкулпа, юратнă учительсемпе, пĕр класра ăс пухнă тус-юлташĕпе сыв пуллашаççĕ-çке. Юлашки шăнкărава итлеме килнисене ашшĕ-амăшĕ те экзаменсене ăнăçлă тытма, хăйсене килĕшекен профессисене суйласа илме сĕнчĕ, пĕрле вĕреннисемпе тата учительсемпе çыхăнăва татмалла маррине палăртрĕ. 1- тата 10-мĕш классенче ăс пухакансем те аслă юлташĕсене сцена çине тухсах саламларĕç.

Кăçал юлашки шăнкărава янăраттармашкăн 11 "А"-мĕш класри Альфир Алеева тата 1-мĕш класра вĕренекен Сабина Искандеровăна шаннă. Паллах, ахальтен мар. Класс ертÿçи Галина Самсонова Альфир питĕ лайăх вĕреннине, пурте йĕркеллех пулсан медаль илме пултарнине пĕлтерчĕ. Унсăр пуçне каччă спортпа туслă, тĕрлĕ мероприятие хастар хутшăнать. Вăл "Зарница", "Орленок" вăйăсене те кашни çулах кайнă.

Акă юлашки шăнкăрав янăрарĕ: ачалăх иртсе пынине систерсе, çĕнĕ пурнăç пуçланассине палăртса... Унăн сасси савăнăçлăн, çав хушăрах кăшт тунсăхлăн илтĕнчĕ...

■ **Ирина КЛЕМЕНТЬЕВА.**

Сергей ЖУРАВЛЕВ сăн ÿкерчĕкĕ

# Экономика форумне хутшăннă

***Çу уйăхĕн 23-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Петербургри пĕтĕм тĕнчери экономика форумĕн «Раççей регионĕсен наци рейтингĕ: пĕрремĕш кăтартусем» сессине хутшăннă.***

РФ субъекчĕсен инвестици климачĕн лару-тăрăвĕн наци рейтингне 21 регионта ирттернĕ. Вăл влаçăн мĕн пур сыпăкĕн регионсенче бизнес тытса пымалли условисене лайăхлатас тĕллевлĕ ĕçĕн тухăçлăхне хаклать. 2015 çултан вара рейтинга çĕр-шывăн мĕн пур субъектĕнче палăртма тытăнĕç.

Чăваш Ене илес тĕк – кунта бизнес валли кирлĕ мĕн пур институт, тивĕçлĕ ресурссемпе инфратытăм пур, пĕчĕк тата вăтам предпринимательлĕхе пулăшаççĕ. Çавна май экономикăна аталантармалли никĕс çирĕп, мĕн пур сферăра çĕнĕ технологисене çул параççĕ, пысăк инвестици проекчĕсене пурнăçлаççĕ, сывлăх сыхлавĕн, вĕренÿ, культура тата спорт сферисенчи ырă улшăнусем вăй илни куç кĕрет.

Куçми пурлăх объекчĕсене патшалăх енчен экспертиза тумалли вăхăта чакарнă, строительство пуçармалли ирĕк илмелли вăхăта кĕскетнĕ, ытти процедурăна ансатлатнă. Раççейре чи малтисен шутĕнче пушă çĕр лаптăкĕсен Пĕрлехи информаци ресурсне йĕркеленĕ. Паянхи кун тĕлне унта çавнашкал 134 лаптăк /397 га/ кăтартăвĕсене кĕртнĕ. Вĕсем – çурт-йĕр çĕклеме, инвестици проекчĕсене пурнăçлама.

**К.ЯКОВЛЕВ.**

*Лару*

# Юбилей тата сумлăрах иртĕ

***Республикăри хула-ялсенче Аслă Çĕнтерĕвĕн 69 çулхи кунне сумлăн ирттернĕренпе вăхăт нумаях та иртмерĕ, йĕркелÿ комитечĕ унăн 70 çулхи юбилейне тата мăнаçлăраххăн ирттерме хатĕрленме тытăнчĕ те. Ку ыйтупа унччен те ĕçленĕ. Юбилейлă уявăн йĕркелÿ комитечĕн çĕнĕ йышне çирĕплетнĕ, тĕп мероприятисен ĕç планне хатĕрленĕ.***

Халĕ чи кирли – ăна пурнăçлама кашнин çанă тавăрса ĕçлемелле. Шăпах çак ыйту çĕкленчĕ те йĕркелÿ комитечĕн Аслă Çĕнтерĕвĕн 70 çулхи юбилейне чыслăн кĕтсе илсе палăртас тĕллевпе пухăннă пĕрремĕш анлă пухăвĕнче. Ăна ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕ Иван Моторин ертсе пычĕ.

Лару кăмăллă самантран пуçланчĕ. Аслă Çĕнтерĕвĕн 69 çулхи кунне кĕтсе илсе йĕркеллĕ ирттерме хастар хутшăннисен пысăк ушкăнне Иван Борисович Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Тав çырăвĕпе чысларĕ. Вĕсен шутĕнче республикăри массăллă информаци хатĕрĕсем те пур.

Ларăвăн кун йĕркинче – виçĕ ыйту: «2015 çулта Шупашкар хулинче Аслă Çĕнтерĕвне уявлассин концепцийĕ çинчен», «Шупашкарта Совет Союзĕн Геройĕн Федот Никитич Орловăн «ИЛ-14» самолетне вырнаçтарасси çинчен» тата «Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин ветеранĕсене тивĕçлĕ медицина пулăшăвĕ парасси çинчен».

Малтанах Шупашкар хула администрацийĕн пуçлăхĕн социаллă ыйтусемпе ĕçлекен çумĕ Алла Салаева сăмах илчĕ. Алла Леонидовна хула ертÿлĕхĕ юбилейччен мероприятисем ирттермелли ятарлă план хатĕрленине, унăн кашни пунктне тĕплĕн тишкерсе тухса йышăннине палăртрĕ. «Эпир ку ыйтусемпе ĕçлеме тытăннă та ĕнтĕ», – терĕ пуçлăх çумĕ.

Чăваш Республикин çар комиссарĕ Александр Мокрушин полковник Улатăр тата Етĕрне районĕсен администрацийĕсемпе общество организацийĕсем, уйрăм çынсем Совет Союзĕн Геройĕн Федот Орловăн «ИЛ-14» самолетне Шупашкара куçарса килме сĕнÿпе тухнине пĕлтерчĕ. Александр Алексеевич ентешĕн нимĕç фашисчĕсене тÿпере тустарнă самолечĕн историйĕпе кĕскен паллаштарчĕ. Вăрçă çулĕсенче ăна Сарсков колхозник укçи-тенкипе тунă, тĕп главнокомандующи патне вĕçев хатĕрне паттăр ентеше пама ыйтса телеграмма янă. Федот Орлов гварди капитанĕ хаклă парнепе 100 хут ытла тÿпене çĕкленнĕ, тăшмана шелсĕр тустарнă. Пурнăç ăна истори валли упранă тейĕн. Паллах, самай кивелнĕ. Юсав тăкакĕ пысăк пулĕ. Ăна хулари хăш вырăнта вырнаçтарасси те хальлĕхе уçăмлах мар. Малтанлăха ăна «Çĕнтерÿ» паркĕнче ытти çар хатĕрĕсемпе юнашар вырнаçтарасшăн пулнă. Калăпăшĕпе кунта шăнăçайманран хулан Мускав проспекчĕпе М.Горький проспекчĕ хĕресленнĕ вырăнта, «Элара» завод тĕлĕнче, лартма сĕнчĕç. «Ыйтăва хальлĕхе татса паман тăк – хула çыннисемпе канашламалла мар-ши?» – терĕ премьер-министр.

ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министрĕ Алла Самойлова Чăваш Енре федерацин «Патшалăх социаллă пулăшăвĕ çинчен» тата «Ветерансем çинчен» саккунĕсем мĕнле пурнăçланнине тĕплĕ каласа кăтартрĕ: «Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин ветеранĕсемпе инваличĕсене 100 проценчĕпех диспансеризаци тунă, вĕсен сывлăхне талăкĕпех сăнаса тăратпăр, кирлĕ чухне васкавлă медпулăшу паратпăр. Шел, вăрçă паттăрĕсем пурнăçран кайсах пыраççĕ...» Канаш хулин администрацийĕн пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Людмила Иванова ветерансен социаллă пурнăçне лайăхлатассипе, вĕсене медицина пулăшăвĕпе тивĕçтерессипе мĕнле ĕçлени çинчен каласа кăтартрĕ.

Ырă тепĕр пулăма та асăнмасăр иртме çук. Йĕркелÿ комитечĕ «Хыпар» хаçат кăçалхи Çĕнтерÿ кунĕнчен хатĕрленĕ репортажра асăрхаттарнă пĕчĕк кăлтăксене шута илнĕ: çитес уявра ветерансем текех хĕвел питтинче пиçмĕç – вĕсем валли ятарлă чатăр хатĕрлĕç. Пысăк экрансен шучĕ те ÿсĕ: хальхисемсĕр пуçне вĕсем Анне палăкĕ патĕнче, кÿлмек хĕрринче, Чăваш академи драма театрĕн çывăхĕнче пулĕç.

■ **Юрий СТЕПАНОВ**

# Кун йĕркинче – кадр ыйтăвĕ

***Шупашкарти кооперaци институтĕнче тунти кун ЧР Пурлăх тата çĕр хутшăнăвĕсен министерстви çумĕнчи общество канашĕн ларăвĕ иртрĕ. Патшалăх служби, вăл шутра пурлăха тытса тăракан, çĕр йĕркелекен тытăмсем валли кадрсем вĕрентсе хатĕрлессипе çыхăннă ыйтăва сÿтсе яврĕç.***

«Пĕлтĕр республикăн пĕрлехи бюджетне пурлăхран 2,4 млрд тенкĕ, виçĕм çулхинчен 27% нумайрах пырса кĕнĕ, – терĕ ЧР пурлăх тата çĕр хутшăнăвĕсен министрĕ Анатолий Кузьмин. – Кăçал унтан тупăш ытларах илме тĕллев лартнă. Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Патшалăх Канашне янă Çырура пушă выртакан тата начар усă куракан çĕр реестрне йĕркелеме хушрĕ. Паянхи кун тĕлне унта – 134 лаптăк. Çĕре ĕçе кĕртнĕ май хыснана кĕмĕл ытларах хывăнĕ».

Республика тата муниципалитетсен хыснинче нухрат нумайрах пухасси патшалăхпа вырăнти хăй тытăмлăх органĕсенче паянхи пурнăç ыйтнине тивĕçтерекен профессионалсем вăй хунинчен нумай килет. ЧР Вĕренÿ тата çамрăксен политикин министерствинчен пĕлтернĕ тăрăх – Чăваш Енри аслă шкулсенче пурлăхпа çĕр хутшăнăвĕсене йĕркелекен органсем валли те кадрсем хатĕрлеççĕ. 21 вузран патшалăхăн – 16, вăл йĕркеленни 5 шутланать. Вĕсенче 47943 студент /2012 çулта 54,7 пин пĕлÿ илнĕ/ хăйĕн пурнăçне вун-вун специальноçпа çыхăнтарма хатĕрленет. «Экономика» специальноçа алла илекен – 7480, «Патшалăха тата муниципалитета ертсе пырасси» специальноçа вĕренекен – 1959, «Çĕр йĕркелесси тата кадастрсем» специальноçа парăнтаракан 183 студент патшалăх пурлăхне тытса тăма, унпа хуçаланма хăнăхаççĕ. Пĕлтĕр çак специальноçсемпе 13153-ĕн, ку шутра хыснаран уйăрнă укçапа усă курса 3424-ăн диплом илме хатĕрленнĕ. Бюджетран куçарнă кĕмĕле тăкакласа кăнтăрлахи уйрăмра пĕлÿ илнĕ 2453 студентран 798-шне ĕçе вырнаçтарма направлени панă, 343-шĕ магистратурăра, ординатурăра, аспирантурăра пĕлĕве ÿстерет, 324-шне Раççей çарне илнĕ, 944-шĕ хăй тĕллĕн ĕçе вырнаçнă, 44-шне ĕçе вырнаçма направлени паман.

Вузсем производствăна тивĕçтерекен специалистсем хатĕрлеме вĕренсе çитнĕренпе кадрсемпе туллин тивĕçтерме, пурнăçра вырăн тупайман çамрăксен йышне пĕчĕклетме май килнĕ. ЧР Халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх службинчен пĕлтернĕ тăрăх – кăçалхи çу уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне республикипе те унта вуз пĕтернĕ 50 çамрăка çеç шута илнĕ. Çапах та ку аслă пĕлÿллисем пурте хăйсен вырăнне тупнине пĕлтермест.

Предприяти-организацире аслă шкулăн 146 кафедри ĕçлет. Ăна И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕ, Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕ, Шупашкарти кооперaци институчĕ чи нумай тата тĕрлĕ отрасльте уçнă. Ларура институт ректорĕ, общество канашĕн председателĕ Валерий Андреев предприяти-организаци, патшалăх службi, уйрăммăн илсен пурлăхпа хуçаланакан, çĕр йĕркелекен тытăмсем валли специалистсем вĕрентсе хатĕрлес тĕлĕшпе еплерех ĕçлени çинчен каласа пачĕ. Иртнĕ çул кунтан «Патшалăха тата муниципалитета ертсе пырасси» специальноçа алла илнĕ пĕр ушкăн вĕренсе тухнă. Студентсемпе аудиторисенче çеç ĕçлемеççĕ. Вĕсен тата патшалăхпа муниципалитет органĕсен çыхăнăвне çирĕплетес тĕллевпе институт ЧР Патшалăх Канашĕпе, Шупашкарпа Çĕнĕ Шупашкар хулисен, Çĕрпÿпе Красноармейски районĕсен депутачĕсен Пухăвĕсемпе килĕшÿ çирĕплетнĕ. «Промышленноç предприятийĕсенче, банксенче, ытти çĕрте пирĕн 29 кафедра ĕçлет, – терĕ В.Андреев. – Çывăх вăхăтра ВТБ-24 банкăн Шупашкарти филиалĕнче тепре уçма палăртрăмăр. Банкçăсем пирĕн преподавательсемпе студентсене хăйсен ĕç-хĕлĕпе паллаштарĕç».

Канаш министерство хатĕрленĕ норматив право акчĕсен проекчĕсене ЧР Министрсен Кабинетĕнче йышăнмашкăн тăратма сĕнчĕ.

■ **Юрий МИХАЙЛОВ**

*Чăвашстат хыпарлать*

# Ачасем – пирĕн пуласлăх

***Юлашки çулсенче çĕр-шывăн социаллă пурнăçĕпе экономикинче тата демографире пысăк улшăнусем пулса иртрĕç. Ача çураласси халăх йышне çĕнетсе пыма пултарайманни, çынсем ватăлса пыни, миграци пĕлтерĕшĕ ÿсни, мăшăрланупа çуратаслăх моделĕ урăхланни, хĕрарăм статусĕ улшăнни тата гендер тĕлĕшĕнчен танлăх патне ăнтăлни, ĕçлев ыйтăвĕсем – çак сăнлавсем Раççей аталанăвне палăрмаллах витĕм кÿреççĕ.***

***2007 çулта Раççей Федерацийĕн 2025 çулччен тапхăрти демографи политикин концепцине йышăннă, нацин "Сывлăх" программи, ачаллă çемьесене патшалăх пулăшăвĕпе тивĕçтермелли мерăсем пурнăça кĕреççĕ. Асăннă мероприятисен комплексĕн тĕллевĕ – çĕр-шыври, республикăри демографи лару-тăрăвне, çавăн пекех çамрăк ăрăвăн пурнăçне лайăхлатасси.***

***Пĕтĕм тĕнчери ачасене хÿтĕлемелли кун умĕн Чăвашстат ертÿçĕ Эльвира МАКСИМОВА Чăваш Енри демографи лару-тăрăвĕпе, çул çитмен çамрăксен сывлăхĕпе тата ачалăха çыхăннă ытти ыйтупа паллаштарма кăмăл турĕ.***

***Паллах, статистика кăтартăвĕсем çакна пур енлĕн уçса параймаççĕ, çапах пĕтĕмĕшле лару-тăрăва, çемьене аталантармалли майсене уçăмлатаççех.***

**– Эльвира Геннадьевна, калаçăва çул çитмен çамрăксемпе çыхăннă ыйтусенчен пуçласан вырăнлă пулассăн туйăнать.**

– 2013 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕ тĕлне республикăра 14 çулчченхи 204 пин ача /пĕтĕм халăхăн 16 проценчĕ, 59 проценчĕ хулара пурăнать/ шутланнă. 2008 çул пуçламăшĕпе танлаштарсан вĕсен хисепĕ 5 процент ÿснĕ.

4 çулчченхисем уйрăмах йышлă – 79 пин /хулара та, ялта та арçын ачасем ытларах/.

Чăваш Республикинче 2013 çулта çут тĕнчене 17 пин çĕнĕ кайăк килнĕ е 1000 çын пуçне 14 ача çуралнă.

Юлашки 20 çулта пĕрремĕш хут халăх шучĕ хăй тĕллĕн 2012 çулта ÿсме тытăнни иртнĕ çулта та, кăçал та сыхланса юлать. 2014 çулхи пĕрремĕш кварталта пĕлтĕрхи çав вăхăтринчен 3 пепке ытларах çуралнă, çуратаслăх иртнĕ çулхи шайрах юлнă: 1000 çын пуçне – 13,4 ача.

2013 çулта çут тĕнчене килнĕ 8 пин тĕпренчĕкрен çуррийĕ – çемьери пĕрремĕш ывăл-хĕр. Çапах та асăннă кăтарту 2008 çултанпа чакса пырать: 2008 çулта – 55, 2010 çулта – 50, 2013 çулта – 43 процент. Сăлтавĕ ача çуратма пултаракан ÿсĕме хальхи вăхăтра иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсенче çут тĕнчене килнĕ хĕрарăмсем кĕнипе çыхăннă. Ун чухнехисем хăйсем те сахаллăн пулнă.

Ачаллă çемьесене патшалăх пулăшăвĕн хушма мерисемпе /амăшĕн капиталĕпе, пособисемпе тата ыттипе/ хавхалантарма тытăннă май çемьере иккĕмĕш /юлашки виçĕ çулта вĕсен йышĕ 38 процентран 41-не çитнĕ/, виççĕмĕш ачасем /9-тан 13/ тата ун хыççăнхисем /пĕр шайрах/ хушăнаççĕ. Пĕлтĕр 100 хĕр ача пуçне 106 арçын ача, 314 йĕкĕреш тата 9 хут хăрăсах 3-шер пепке çуралнă.

**– Çуратаслăхăн пĕтĕмĕшле коэффициенчĕ, амăшĕсен ÿсĕмĕ пирки мĕн каланă пулăттăр?**

– Çуратаслăхăн пĕтĕмĕшле коэффициенчĕ 2012 çулта пĕр хĕрарăм пуçне 1,8-па /2008 çулта – 1,5/ танлашнă. Çапах ку кăтарту ăрăва улăштармалăх çитмест, çапла тумашкăн сахалтан та 2,1-2,2 ача пулмалла. Ялти лару-тăру шанчăклăрах – пĕр хĕрарăм пуçне 2012 çулта 2,577 ывăл-хĕр тивнĕ е хуларинчен /1,545/ 1,7 хут пысăкрах.

Пепкисене пурнăç парнелекенсен хушшинче 20-24 тата 25-29 çултисем йышлăрах пулин те юлашки вăхăтра аслăрах ÿсĕмрисем /30-39 çултисем/ çуратнă тĕслĕх те сахал мар.

29 çулччен амăшĕн ятне тивĕçнисенчен çут тĕнчене килнисем йышлансах пыраççĕ /ачасен 65 проценчĕ/, çав шутра хут уйăрттарнисен – 81 процент.

2013 çулта çуралнисен 20,1 проценчĕн ашшĕ-амăшĕ официаллă йĕркепе мăшăрланура тăман тата 2012 çулхипе танлаштарсан ку кăтарту – 0,8, 2009 çулхинчен 3,3 пункт чакнă. Саккун йĕркипе хут уйăрттармасăр пурăнакан ашшĕ-амăшĕн ыйтăвĕ тăрăх регистрациленĕ ачасем 38 процент пулнă, ыттисем – амăшĕн заявленийĕпе кăна. 2009-2013 çулсенче çырăнмасăр пурăнакансем 18 пин ача çуратнă. Пĕлтĕр 15 çула çитмен – 10, 16 çулчченхи – 21, 17 çулти 46 хĕр ача амăшĕ пулса тăнă.

Çуралăслăх çемье институчĕпе çыхăннă. Хут уйăрнă мăшăрланусен хисепĕ пĕлтĕр малтанхи çулхинчен ытлашшиех ÿснен. Уйрăлакансем вара йышлансах пыраççĕ, асăннă тапхăрта ку кăтарту 5 процент пысăкланнă. Чăмăртаннă 1000 çемье пуçне уйрăлнисем 502 мăшăр пулнă. 18 çул тултарман 3505 çамрăк çав сăлтавпа пĕлтĕр ашшĕ-амăшĕнчен пĕринсĕр юлнă.

**– Шел, çул çитменнисен хушшинче вăхăтсăр вилнисем те пур вĕт. Статистика кăтартăвĕсем тăрăх – инкек-синкек сăлтавĕ мĕнре?**

– Статистика çирĕплетнĕ тăрăх – 2013 çулта 14 çулчченхи 148 çамрăк пурнăçран вăхăтсăр уйрăлнă. 2010 çулхипе танлаштарсан ку енĕпе 1000 çын пуçне тивекен кăтарту 16 процент чакнă.

Пĕлтĕр инкек-синкеке, наркăмăшланнине, аманнине, хăй çине алă хунине, вĕлернине пула 55 ача /14 çулччен вилнисен пĕтĕм йышĕн 37 проценчĕ/ леш тĕнчене вăхăтсăр кайнă. Сывлăхпа çыхăнман сăлтавпа куçне ĕмĕрлĕх хупнисен 38 проценчĕ /21 çын/ сывлăш пÿлĕннипе /вĕсенчен 20-шĕ çултанлăка та çитмен/ асапланнă. Шыва путнипе кунçул татăлнисен тÿпи – 18, транспорт аварине лекнипе – 13 процент.

Çакна палăртмалла: юлашки çулсенче тулашри сăлтавсене пула пурнăçран уйрăласси ÿснĕ, 2011 çулхи 30 процентран 2013 çулта 37-е çитнĕ. Иккĕмĕш вырăнта – ерекен тата паразит чир-чĕрĕ, виççĕмĕшĕнче – çĕнĕ йĕркеленÿ.

Демографин халăх сывлăхĕн тата сывлăх сыхлавĕн аталанăвĕн шайне сăнлакан тĕп кăтартăвĕсенчен пĕри – пĕчĕккисен вилĕмĕ. Тĕрлĕ амака, аманнине тата наркăмăшланнине пула пĕлтĕр çултанлăка çитмен 83 пепке кун-çулĕ татăлнă. Юлашки пилĕк çулта пĕчĕккисем вилесси чĕрĕ çуралнă 1000 ача пуçне 6,7-рен 4,8-а çити пĕчĕкленнĕ. Пурнăçран вăхăтсăр уйрăлни чылай чухне перинаталь тапхăрĕнчи улшăнупа тата çураличченхи тĕрĕс мар аталанупа /22 процент/, урăхла каласан амăшĕн чир-чĕрĕпе çыхăннă.

Çулталăка çитмесĕр вилнисен шайĕ 14 çулччен пурнăçран уйрăлнисен хушшинче – 56, 5 çулчченхисен йышĕнче 75 процентпа танлашать.

14 çулченхи ачасен малтанхи чирĕсен тытăмне илес тĕк пĕлтĕр сывлав органĕсен амакĕ /57 процент/ тĕп вырăн йышăннă.

Амăшлăхпа ачалăх сывлăхне упрассине пирĕн республика ертÿлĕхĕ тивĕçлипе хаклать. Иртнĕ çул вĕçленнĕ тĕле Чăваш хутлăхĕнче хĕрарăмсене тата ачасене медицина пулăшăвĕпе тивĕçтерекен консультацисем, поликлиникăсем, амбулаторисем /хăйсем тĕллĕн ĕçлекеннисем/ тата консультацисемпе ача-пăча уйрăмĕсемлĕ организацисем 81 шутланнă, вĕсенче çуратма хатĕрленекенсен тата çуратнă хыççăн выртакансен – 604, гинекологи пациенчĕсен – 454, ачасен 1649 койка-вырăнĕ пулнă. 2013 çул вĕçĕнче 10 пин хĕрарăм пуçне 5,1 акушер-гинеколог, 10 пин ача пуçне 27,5 педиатр тивнĕ.

■ **Валентина СМИРНОВА калаçнă**

---

**"Чăваш Республикин "Чăваш Республикинчи культура еткерĕн объекчĕсем /истори тата культура палăкĕсем/ çинчен" саккунне пурнăçлани çинчен" темăпа парламент итлевĕ ирттересси çинчен**

"Чăваш Республикин "Чăваш Республикинчи культура еткерĕн объекчĕсем /истори тата культура палăкĕсем/ çинчен" саккунне пурнăçлани çинчен" темăпа парламент итлевĕ 2014 çулхи çĕртме уйăхĕн 4-мĕшĕнче Шупашкар хулинчи Чăваш наци музейĕн ларусен залĕнче /Хĕрлĕ тÿрем, 5 çурт/ иртет. 10 сехетре пуçланать.

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕсемпе чĕннĕ хăнасене Чăваш наци музейĕн фойинче çĕртме уйăхĕн 4-мĕшĕнче 9 сехетрен пуçласа регистрацилеççĕ.

Ыйтса пĕлмелли телефонсем: 64-21-65, 64-21-64, хушма номер: 1030.

## Саламлатпăр

Чăваш Республикин Пуçлăхĕн 2014 çулхи çу уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 69-мĕш указĕпе килĕшÿллĕн предпринимательлĕх аталанăвне тÿпе хывнăшăн тата ĕçри çитĕнÿсемшĕн Шупашкар хулинчи "ОВАС" тулли мар яваплă обществăн генеральнăй директорне **Олег Николаевич СМИРНОВА,** "Шупашкар Электротехники тата Автоматики" тулли мар яваплă обществăн генеральнăй директорне **Александр Васильевич КОЛБАСОВА,** Шупашкар хулинчи "ПРОиКО" акционерсен хупă обществин генеральнăй директорне **Александр Руфимович МОРОЗОВА "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ПРЕДПРИНИМАТЕЛĔ"** хисеплĕ ят панă.

# "Пиллĕк" илнисене чысларĕç



*Ака уйăхĕн 25-мĕшĕнче пĕтĕм чăваш диктантне çыртăмăр. Пĕрлехи çыру ĕçĕнче "пиллĕк" илнисен списокне "Хыпар" хаçатра пичетлененччĕ. Çу уйăхĕн 22-мĕшĕнче Чăваш патшалăх гуманитари институтĕнче вĕсене чысласа уяв иртрĕ.*

...Акт залĕ лăк тулли. Хаваслă сăн-питлĕ "пиллĕкçĕсемпе" пĕрлех кунта – йĕркелÿçĕсемпе ĕçсене тĕрĕсленĕ чĕлхеçĕсем те. ЧПГĂИ директорĕ Юрий Исаев чыслава уçнă май сцена çине хаклă хăнасене хăпарма чĕнчĕ. Вĕсен йышĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕн мăшăрĕ Лариса Игнатьева та пур.

– Чăвашла диктанта чи лайăх паллăлăх çырнисем çак ĕçе чăнахах юратса туни палăрать. Халăх ăс-хакăлĕн управçисем вĕсем. Акци хастарĕсене чыслама йыхрав илсен кунта килме хаваспах килĕшрĕм. Чăваш культурине пăхăнса пурăнакансенче – халăх вăйĕ-çке. Анлă пулăма аякри йăхташсем хутшăнни, вĕсем пирĕнпе – тĕп чăвашсемпе – çыхăну тытни вара тата ытларах хăват парса тăрать, – диктант пĕлтерĕшĕн анлăшне уçрĕ Лариса Юрьевна.

Чăваш Республикин вĕренÿ институчĕн /акци йĕркелÿçисен йышĕнче çак учрежедени те пулчĕ/ ертÿçи Елизавета Казакова пĕрлехи диктанта чăвашсене пĕтĕçтерекен пĕр пĕчĕк лапам пек курать, малашне вара йăхташсем вăйăсене пĕрле аса илессе, йышлăн пухăнса юрăсем шăрантасса шанать. "Çапла утăмăн-утăмăн ĕçлесе хамăрăн несĕлсенчен упранса юлнă пуянлăха пĕтме памăпăр", – терĕ.

"Чăваш Ен" наци телерадиокомпанийĕн ертÿçи Александр Магарин унăн шухăшĕпе халех витерĕннине палăртрĕ. Диктант çырас ĕçе йĕркелеме хавхаланса хутшăннине çирĕплетрĕ.

Тĕнчери чăвашсене йăх-тымар çинчен аса илтерес, тăван чĕлхене аталантарас йÿтĕмпе пуçарнă акцие "Хыпар" Издательство çурчĕ те пуçарулла хутшăнчĕ. Чыславра ытти партнерпа пĕрле пире те Тав çырăвĕпе чысларĕç.

Аса илтеретпĕр: акцие пурĕ 3100 çын хутшăннă. "Пиллĕк" хуçисем – 136-ăн. Çак йышра – Шупашкарти Н.В.Никольский ячĕллĕ педагогика колледжĕн ертÿçи Валерий Сапожников та.

– Çак акцие чун хавалĕпе хутшăнтăм. Хăш-пĕр юлташ "сана хавхалантарас тĕллевпе, должноçна кура "пиллĕк" лартса панă ĕнтĕ" тесе шÿтлерĕ. Манăн вара чăваш чĕлхипе дневникре мар, тетрадьре те "тăваттă" пулман. Шкулалла васкакан Ванюк çинчен сăвва – 1949 çулта, пĕрремĕш класра – вĕреннине халĕ те ас тăватăп. Чăваш халăхĕн чылай юррин сăмахĕсене пĕлетĕп, – патшалăх ертÿлĕхĕнче те ĕçленĕ сумлă çыннăмăра мухтанас туйăм мар, тăван халăхпа мăнаçланни калаттарчĕ çак сăмахсене.

Парне валеçес самант çывхарнă май пухăннисен умне кăçалхи диктант тексчĕн авторĕ Марина Карягина тухрĕ. Хăй калас тенĕ шухăша кашни çыракан хăйĕн сăмахĕ пек йышăннине текста вуласа панă чухне ăнланса илнĕскер çапла каларĕ:

– Манăн кăмăлăм тулчĕ: аудиторири çынсене куçран пăхса килентĕм. Çак ĕçе чун хушнипе пурнăçланине туйрăм. Малашне пирĕн йыш хушăнса та пырĕ. 3 пин çинчен мар, 30 е 50 пин çын хутшăнни çинчен калаçмалли вăхăт та çитĕ...

■ **Ирина ПУШКИНА.**

Л.МИХАЙЛОВА сăн ÿкерчĕкĕ

# ЫЙТУ ХУРАВ

## Пирĕн ентеш — киноактер

**Шупашкарти кинофестивале пирĕн ентеш Анатолий Гущин актер та хутшăнать тенине вуласа пĕлтĕм. Ăçта çуралса ÿснĕ вăл? Мĕнле фильмсенче ÿкерĕннĕ?**

**И.МИХЕЕВА.**
Шăмăршă районĕ.



Раççей театр тата кино актерĕ Анатолий Александрович Гущин 1976 çулхи чÿкĕн 30-мĕшĕнче Çĕнĕ Шупашкарта çуралнă. Ашшĕ – вырăс, амăшĕ – чăваш. Çĕнĕ Шупашкарти 10-мĕш шкултан вĕренсе тухсан Мускава кусса кайнă. 1998 çулта М.С.Щепкин ячĕллĕ аслă театр училищине пĕтернĕ. "Таганка актерĕсен пĕрлĕхĕ" театрта Николай Губенко патĕнче ĕçленĕ. Хальхи вăхăтра Мускавра ĕçлесе пурăнать.

Актерăн кинори карьери 2000 çулта пуçланнă. Унтанпа 60 ытла фильмра вылянă. Ентеш ÿкерĕннĕ пĕрремĕш сериал – "Маросейка, 12". Юлашки вăхăтри паллăрах ĕçĕсем – "Сын отца народов" /Толя Гущин/, "Вий" /Брусак/, "Москва: Три вокзала" /Заика/, "Глухарь: Возвращение" /прокуратура следователĕ Константин Васин/, "Гаражи" /Чубиков участковăй/, "Сделано в СССР" /Михаил/, "Гагарин. Первый в космосе" /Алексей Леонов/ т.ыт.те. А.Гущин çавăн пекех Анатолий Воропаевăн продюсер компанийĕн "Чонкин", "Шулера" спектаклĕсенче вылять.

Чăнах та, малтан Анатолий кинофестивале хутшăнассине пĕлтернĕччĕ. Анчах палăртнă кун ентешĕмĕр Шупашкара килсе çитеймерĕ.

## Илемлĕ, çитменлĕхсене те пытарать

**Хальхи вăхăтра парик тăхăнакан çукрах. Пĕрремĕш Петр патша вăхăтĕнче, маларах та вăл модăра пулнă. Е пуç çинчи çитменлĕхсене пытарма парик тăхăннă-и?**

**Л.ЖАРОВ.**
Çĕрпÿ хули.



Парикăн тепĕр тивĕçĕ – пуç çинчи çитменлĕхсене пытарасси. Акă Юлий Цезарь шакла пулнă. Анчах çут пуçа вăл парикпе мар /Римра модăра пулман/, кăшăлпа пытарнă. Вăтам ĕмĕрсенче турра чунтан парăннине çирĕплетме çÿçе парне вырăнне панă. Хăйсем вара парик тăхăнса çÿренĕ. Вельможăсем тата? Патша калпакпа илемлĕ курăнман. Парик вара пачах урăх япала. Сивĕре икĕ вилĕ...

Этем сĕм авалтан пуçа илемлетме парик тăхăннă. Вăйлă вăкăр е хăвăрт ăмăрт кайăк пек пулас тесе мăн асаттесем сунарта тытнă чĕр чун тĕкне тăпăлтарса е тирне сÿсе илсе хăйсен пуçĕсем çумне тикĕтпе çыпăçтарса хунă. Çакăн евĕр эреш çын çÿллĕ шайри обществăна кĕнине кăтартнă. Вăхăт иртнĕ май "чĕр чун" парикĕсем модăран тухнă. Çак йăла-йĕркерен юлнă ахрăм – Скандинави салтакĕсен шлемĕсем çинчи мăйрака.

Сивĕре икĕ вичçĕ парик тăхăннă.

I Петĕр патша Европăра çул çÿревре пулнă хыççăн парикпе "чирлесе" кайнă. Вырăс куписисен сăх сăхса, вăрттăн чăркăшса сухалĕсене хырнă вăхăтра "басурмансен намăсне" тăхăнма тивнĕ. Анчах çырлахнă. Сумлă вĕт.

Хальхи вăхăтра та парик тăхăнакан пур. Анчах илемшĕн мар, чылай чухне урăх сăлтавсемпе.

## Сарă, хĕрлĕ тюльпансем...

**Питĕ илемлĕ вăхăт халĕ: йĕри-тавра ем-ешĕл, йывăç-курăк çеçкере... Сарă, хĕрлĕ тюльпансем еплерех хитре тата! Ăçтан килнĕши çак чечек пирĕн тăрăха? Унăн тăван çĕршывĕ ăçтарах?**

**А.ЗАХАРОВА.**
Шупашкар районĕ.



Хăшĕ-пĕри тюльпанăн тăван çĕрĕ Голланди тесе шухăшлать. Тĕлĕнмелле çак чечеке вара чи малтан Тянь-Шань тăвĕсен сывăхĕнчи çеçен хирсенче асăрханă. Авалхи перссем, каярахпа турккăсем вĕсене "алла илнĕ". Акă "Великолепный век" сериалта хĕрлĕ тата сарă тюльпанлă кавирсем курăнаççĕ. Вăрăм папкаллă, шĕвĕр çеçкеллĕ чечексене, турккăсен хĕçне аса илтерекенсене, уйрăмах хакланă.

Австрин Константинопольти посланникĕ пĕррехинче Венăна тюльпанăн темиçе пуçне илсе килнĕ. I Фердинанд императорăн пахчаçи чечеке Европăри паллă садсенче ÿстерме пуçланă. Çакăн хыççăн Венеци купсисем Турцири пахчасенчен тюльпан куçарса килме пуçланă. Хăш-пĕр коллекционер садĕнче пилĕк çĕр ытла сорт пухăнса кайнă. Тюльпан пуянлăх палли пулса тăнă.

Суту-илÿ тума ăста голландсем 1630 çулсенче тюльпанпа "чирлесех" кайнă. Халăх çак чечекпе кăсăкланни хаксене ÿстерсе янă. Пĕр пуç хĕр туприпе танлашнă. Тепри тата пĕррехинче чечекĕн пĕр пуçĕпех хупах туяннă. Купсасемпе дворянсем, моряксемпе тарçăсем – пурте ăсран тайăлнă тейĕн. Тюльпана биржăсенче сутма пуçланă, унпа фьючерс килĕшĕвĕсем çырма тытăннă. Кайран, паллах, кĕтмен çĕртен "тюльпан хăмпи" çурăлнă. Пĕрисем пуйса юлнă, теприсем çука тухнă, тюльпан пуçĕсем тултарнă ешчĕксем çине вырта макăракан та чылай пулнă. Апла пулин те пин-пин сорт тăрса юлнă, хальхи голландсен тупăшĕн тĕп çăл-куçĕ пулса тăнă.

## Саккун кун-çулĕ

**Раççейре айăпласа вĕлерме тахçанах чарнă. Çак саккун кун-çулĕ кăсăклантарать. Эпĕ пĕлнĕ тăрăх ăна темиçе хутчен те пăрахçланă, унтан татах вăя кĕртнĕ...**

**Р.ФЕДОРОВ.**
Комсомольски районĕ.



Русри пĕрремĕш "Русская правда" саккун пуххинче айăпласа вĕлересси пирки каламан. Анчах çулсем иртнĕ май вăл "усалланнă".

1479 çулхи саккунпа çынна вĕлернĕшĕн, вăрланăшăн, патшалăха сутнăшăн пурнăçран уйăрнă. 1649 çулта аллă ытла преступленишĕн айăпласа вĕлернĕ. Саккуна пăсакана çакса тата кĕлеткине тăватта пайласа, пуçне касса, çунтарса /тĕн преступленийĕсемшĕн/ вĕлернĕ.

Айăпласа вĕлерессине пĕрремĕш хут Раççейре XVIII ĕмĕрте пăрахçланă. Чылай чухне тата та тискертерех хăтланнă: сăмсана тăпăлтарнă е клеме çапнă. II Кĕтерне патша саманинче патшалăх преступленийĕсене тунисене айăпласа вĕлернĕ. Тĕслĕхрен, Пăкачав халăхне хутшăннисене çапла майпа явап тыттарнă.

XIX ĕмĕр пуçламăшĕнчен тытăнса çĕр çула яхăн Раççейре икĕ меслетпе – персе пăрахнă тата çакса вĕлернĕ – усă курнă. Теори тĕлĕшĕнчен айăпланакана Вĕтам ĕмĕрсенчи пек тăвăтă пая ваклама та пултарнă. Декабристсемпе çапла тума йышăннă. Çапах та юлашкинчен пуртта вĕренпе улăштарнă.

Иккĕмĕш хут ку саккуна Февраль революцийĕ хыççăн пăрахçланă. Кăштахран каллех вăйа кĕртнĕ: çар преступленийĕсемшĕн, сутăнчăклăхшăн, çынна вĕлернĕшĕн, çаратнăшăн пурнăçран уйăрнă. 1917 çулхи юпа уйăхĕнче влаçа алла илнĕ большевиксем вĕлерессине улăштарнă /виççĕмĕш хут/. 1918 çулхи авăн уйăхĕнче "хĕрлĕ террор" пуçлансан çак саккунпа каллех усă курма тытăннă. Малтанах контрреволюционерсене, пăлхавçăсене, каварçăсене айăпласа вĕлернĕ. Каярахпа преступленисен списокĕ анлăланнă.

Чылай вăхăт айăплава персе пăрахса пурнăçа кĕртнĕ. 1943 çултан нацистсене пулăшакансене тата çар преступникĕсене çакса вĕлерме пуçланă. 1947 çулта саккуна тăваттăмĕш хут пăрахçланă. 1950 çултан Тăван çĕр-шыва сутакансене, шпионсене диверсантсене явап тыттарма усă курма тытăннă. 1960 çулхи УКапа килĕшÿллĕн çын вĕлернĕшĕн, пусмăрланăшăн, пысăк виçепе вăрланăшăн, терроризмшăн, тарса çÿренĕшĕн пурнăçран уйăрнă. 1999 çулта Раççейре айăпласа вĕлерме чарнă. Ку – пиллĕкмĕш хут.

## Выляма чарнă

**Грецире компьютерпа вăйă вылянăшăн тĕрмене хупаççĕ теççĕ. Тĕрĕссех-и?**

**М.ВАСИЛЬЕВ.**
Тăвай районĕ.



Чăнах та, темиçе çул каялла Грецире ĕçрен пушă вăхăтра компьютерпа пасьянс вылякан менеджер çăмăллăнах тĕрмене лекме пултарнă. 2002 çулта çак çĕр-шывра компьютер тата видеовăйăсене чаракан 3037-мĕш саккун йышăннă. Вăл мĕн пур электрон вăйăсене, çав шутра тÿлевлĕ вăйă автомачĕсене те, телефонрисене те чарнă. Килте те выляма юраман.

Саккуна пăхăнманнисене 1-12 уйăхлăха тĕрмене хупнă е сахалтан та 5000 евро чухлĕ штрафланă. Иккĕмĕш хут лексен штраф виçи 75000 европа танлашнă. Саккуна пăсакансене çине тăрсах хăваланă, тытса чарнă. Паллах, халăх кăмăлсăрланнă, суда паракансем йышланнă.

Юлашкинчен саккун Конституцие хирĕçлет тесе йышăннă. Халĕ унпа интернет-кафесен тата астармăш вăйăсен тĕлĕшпе /чылай чухне ячĕшĕн тенĕ пек/ кăна усă кураççĕ.

**Кăларăма Валентина БАГАДЕРОВА хатĕрленĕ.**





# КУЛЬТУРА

## Ĕмĕрсен еткерĕ

*Çивĕч ыйту*

# Ял – апат-çимĕç хатĕрлевçи çеç мар

***Ака уйăхĕн 21-мĕшĕнче Раççей Президенчĕ Владимир Путин Президент çумĕнчи нацин пĕлтерĕшлĕ проекчĕсемпе демографи политикин ыйтăвĕсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе ĕçлекен Канашпа Патшалăх канашĕн пĕрлехи ларăвне ирттернĕ. Унта, тĕпрен илсен, ял территорийĕсене аталантарассипе çыхăннă ыйтусене сӳтсе явнă.***

«Ял территорийĕсем экономика, демографи, çут çанталăк тата исторӗпе культура вăй-хăвачĕпе питĕ пуян. Пирĕн тĕллев – унпа тухăçлă, пĕлсе, çĕр-шыв интересĕсене тĕпе хурса усă курасси, миллион-миллион гражданăн пурнăç пахалăхне çĕклесси. Çав вăхăтрах пирĕн çакна асра тытмалла: ял Раççейшĕн – апат-çимĕç хатĕрлекен вырăн çеç мар. Вăл – йăлана кĕрсе çирĕпленнĕ йĕрке, пурнăç майĕ. Вăл – пирĕн культурăн пуянлăхĕ тата питĕ пысăк çĕр-шывăмăрти нумай нациллĕ халăхăн хăй евĕрлĕхĕ», – тенĕ Владимир Путин.

Паянхи яла квалификациллĕ специалистсем кирлĕ. Çамрăксене яллă вырăнпа кăсăклантарас тĕлĕшпе çĕршыв пуçлăхĕ çавăн пек çынсем мĕн чухлĕ кирлине палăртма тата кашни регионти ял территорийĕсенчех вĕсене хатĕрлеме условисем туса пама сĕннĕ.

Пирĕн республикăра ку енĕпе лару-тăру мĕнлерех-ха? Ялти культура учрежденийĕсене аталантарас тĕлĕшпе тĕллевлĕ ĕçленине палăртмалла. 2008-2013 çулсенче 159 клуб çуртне тĕпрен юсаса çĕнетнĕ. Çак тĕллевпе Чăваш Республикин бюджетĕнчен 107,7млн тенкĕ уйăрнă /кашни клуба вăтамран 677 пин тенкĕ тивет/. Асăннă 159 клубран 84-шĕ çутă, сасă, видеопроекци, компьютер хатĕрĕсемпе, сцена тумĕпе пуянланнă. 2014 çулта ял клубĕсене тĕпрен юсама республика бюджетĕнче тата 22721,4 пин тенкĕ хывса хăварнă. Çак укçапа 27 клуба çĕнетме май килĕ.

Иртнĕ çул Муркаш районĕнчи Мăн Сĕнтĕрти культура çуртне хута янăччĕ. Ăна тума Чăваш Ен республика бюджетĕнчен 18972 пин тенкĕ куçарса панă. Хальхи вăхăтра Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Кукашни ялĕнче клуб тума пуçланă, вăл 2015 çулта ĕçлеме пуçлĕ.

Кăçалхи кăрлачăн 1-мĕшĕ тĕлне республикăн муниципалитет тытăмĕнче 750 культурăпа кану учрежденийĕ ĕçлет. Çав вăхăтрах инçетре вырнаçнă тата сахал йышлă ялсен 43,6 проценчĕ – стационарлă клуб учрежденийĕсемсĕр.

Республикăра клубсене спонсор шучĕпе е ялсенчи çамрăксем хăйсен вăйĕпе çĕкленĕ, тĕпрен юсанă тĕслĕхсем чылай. Сăмахран, Шупашкар районĕнчи Вăрманкасси ял тăрăхне кĕрекен Атăлялĕнчи культура çуртне спонсорсен укçи-тенкипе хута янă. Пилĕк çул каялла Муркаш районĕнчи Яракри çамрăксен вăйĕпе туса лартнă хăтлă клуб ĕçлеме пуçланă.

Муниципалитет тытăмĕнче 749 культурăпа кану учрежденийĕ, 536 библиотека, 13 музей, культурăпа кану паркĕсем 7, çавăн пекех 25 архив тата ачасене хушма пĕлӳ паракан 46 шкул.

Кăçалхи çу уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне Чăваш Республикин культура сферинче 6276 çын шутланать, вĕсенчен 1885-шĕ – патшалăх учрежденийĕсенче, 4391-шĕ – муниципалитет тытăмĕнче.

■ **Надежда ГЕОРГИЕВА**

# Чăвашсем – «Çурçĕр çăлтăрĕсем» фестивальте

***Мурманск хулинчи С.М.Киров ячĕллĕ культура тата халăх пултарулăхĕн çуртĕнче Халăхсен хушшинчи «Çурçĕр çăлтăрĕсем» фестиваль иртрĕ. Мурманск çĕрĕнче пултаруллă çемьесем тăваттăмĕш хут пухăнса хăйсен юрри-ташшипе савăнтарчĕç.***

Фестивале 37 çемье хутшăнчĕ. Чи аслисем çитмĕлтен иртнĕ. Сцена çине тухнă чи çамрăк талант çулталăк та тултарайман. «Çурçĕр çăлтăрĕсен» анлăшĕ çулсерен сарăлсах пырать. Кăçал Норвеги, Беларуç, Украина çĕршывĕсенчи, Карели Республикипе, Вологда, Тамбов, Ленинград, Архангельск облаçĕсенчи çемье коллективĕсем юрă-ташăпа пысăк сцена çине тухрĕç.

Виçĕ куна тăсăлнă фестиваль программи пуян та нумай енлĕ. Экскурсисем, паллашу каçĕсем йĕркеленĕ, çемье клубĕсен ертӳçисем, çемьесемпе ĕçлекен специалистсем «çавра сĕтел» ларăвне хутшăнчĕç, декорацие хушма искусство енĕпе ăсталăх класĕсем иртрĕç.

Мурманск облаçĕн чысне хӳтĕленисен йышĕнче чăвашсем те пулчĕç. Мончегорскри Петровсемпе Исметовсен «Тăвансем» ансамбльне куракансем тăвăллăн алă çупса йышăнчĕç. Коллектив 2011 çулта йĕркеленнĕ. Пилĕк çынлă ушкăна Татьяна Чернова ертсе пырать. Вăлах Мончегорскри наци культурисен «Единство» клубĕн ертӳçи те.

■ **И.СЕРГЕЕВА**

*Премьера*

# Спектакль хыççăн çуралнă шухăш



К.В.Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи драма театрĕнче çак кунсенче сцена çине çĕнĕ ĕç – Алексей Писемскин «Горькая судьбина» пьесипе лартнă «Синкерлĕ шăпа» спектакль – тухрĕ. Ăна Наталия Сергеева режиссер лартнă, художникĕ – Светлана Зверева. Пьесăна Чăваш халăх поэчĕ Юрий Сементер куçарнă.

Спектакльти ĕç-пуç XIX ĕмĕрĕн 60-мĕш çулĕсенче пулса иртет. Ананий хресчен Питĕрте ĕçлесе пурăнать, анчах тăван ялĕпе тытакан çыхăну та çирĕпха. Мăшăрĕпе, ача «çуратайманскерпе», юрату пирки сăмах хускатса курман. «Выçă лармасть, çĕтĕк çӳремест – тата мĕн кирлĕ», – çапла шухăшлать арçын. Йăнăшнă-мĕн. Лизавета илĕртӳллĕ, хĕрӳллĕ хĕрарăм, юратушăн ăнтăлакан чун пулнине пуян улпут асăрханă. Хутшăнусем çирĕпленнĕ, ача та çуралнă...

Мĕн пĕлтерĕшлĕ пурнăçра? Хырăм тутă пулни çеç-ши? Акă мĕнле шухăшсем çуралаççĕ спектакльпе паллашнă хыççăн.

■ **Надежда СМИРНОВА**

*Чунри*

# Халăх ятне ярас марччĕ

***Чăваш этносĕ пирки калаçнă чух маншăн тĕлĕнмелли, ăнланайман самант сике-сике тухать. Ăсчахсенчен ыйтас килет.***

Час-часах хамăрпа хамăр мухтаннине асăрхама тӳр килет. Çав вăхăтрах йышăнма тивет: вулама, çырма, юрă кĕвĕлеме пирĕн халăх иртнĕ ĕмĕр пуçламăшĕнче кăна тытăнман-и вара? Тĕлĕнмелле: чăваш композиторĕсем питĕ кĕске вăхăтра симфони, опера шайне çĕкленчĕç. Рынок тытăмне куçнă хыççăнах чăваш музыки пĕтрĕ. Çакна ниепле те ăнланма çук! Пĕлетпĕр-ха: уйрăм халăх культури вăхăт иртнĕçемĕн ытти халăхăннипе çывăхланса, пĕр пекленсе пырать. Эфирта паян янăракан юрăсене илес тĕк – вĕсене вырăссен ĕлĕкрех çырнă юррисен сĕмĕ çапнă: кĕвĕ-çемĕ майлашăвĕ пирĕн мар. Хăй вăхăтĕнче Аристарх Орлов-Шуçăм композитор вырăс майлă çырнă юрăсене эфира кăларма çеç мар, ялти клубсенче те юрлама чаратчĕ. Паян вара? Акă пĕри нумаях пулмасть Чăваш радиопа анне çинчен хывнă юрра пуçларĕ. Пĕрремĕш йĕркине илтсенех вырăс халăх юрри – «Ямщик, не гони лошадей» – пуça килчĕ.

Ан тив, юррине çыраканĕ те, ăна шăрантараканĕ те «айванкка» тейĕпĕр. Радиора ĕçлекенсем вара? «Эй! Шупашкар! Чăваш ятне ан яр!» – тесе хыттăн кăшкăрассăм килет.

Чăваш халăхĕн «вилĕмĕ» музыкăран пуçланчĕ иккен.

Халĕ тата хулапа район центрĕсенче кăна мар, ялсенче те чылайăшĕ ачисене çуралнă-çуралманах вырăсла калаçтарма пуçларĕ. Л.Н.Гумилев пĕтĕмлетĕвĕ тăрăх – кирек хăш этносăн ĕмĕрĕ 1300-1500 çула тăсăлать. Вăлах çапла та каланă: «Гуннсене çапса салатнă хыççăн вĕсен йăх-таврашĕ Вăтам Атăл тăрăх саланса пĕтнĕ». Эпĕ таçта вуланă тăрăх – чăвашсем Аттила йăхĕнчен тухнă.

Пирĕн несĕлсем Аттила хыççăн пуçланса кайнă тăк – халĕ шăпах 1600 çул патне çывхаратпăр мар-и? Ку чăнах та çаплах пулсан чăвашăн ĕмĕрĕ вĕçленнинчен ним тĕлĕнмелли те çук! Çапах та çакна ĕненес килмест.

Тĕрлĕ çăл куçа шансан – ĕлĕк-авал чăвашăн çырулăхĕ тата музыки пулман-мĕн. Çакна та йышăнас килмест. Пĕр тĕслĕх илсе кăтартам: 1960 çулта эпĕ, çамрăк вăйăçă, туйсенче купăс каласа çӳрерĕм. Тĕлĕнмелле илемлĕ йăлайĕрке! Туй, çĕнĕ хăта юрри, хĕр йĕрри, туй хыççăн çамрăк мăшăрсене хĕве хупнă вăхăтра каламалли кĕвĕ тата ытти авалтан килмен-и вара? Чăн та, вĕсем паян çук ĕнтĕ – «вилнĕ», яланлăхах çухалнă. Анчах пулнă!

Эпир çакна хирĕç тăмастпăр та... Мĕн тери шел пире. Пирĕн чĕлхене, юрă-кĕвве, йăлайĕркене.

■ **Борис ПРОХОРОВ.**

●➡ 6,11,12 стр.

КУЛЬТУРА

*Ăста*

# Ырă йывăçран — ырă çимĕç

***Истори ас тăвăмĕ пур чухне кирек хăш халăх та чĕрĕ. Ас тăвăмăн храмĕ вара – музей. Шăпах çак уйăхра, тĕрĕсрех, çу уйăхĕн 18-мĕшĕнче, Музей кунне паллă турăмăр.***

Республикăра патшалăх тата муниципалитет тытса тăракан музейсем 16. Унсăр пуçне районсенче культура учрежденийĕсем çумĕнче е шкулсенче те пур вĕсем. Унашкаллисене тытса тăма уйрăмах йывăр, çакскерсем халĕччен упранса юлни пĕтĕмпех унта ĕçлекенсен хастарлăхĕпе çыхăннă. Нумаях пулмасть вĕсенчен пĕрне – Елчĕк районĕн культурăпа кану центрĕ çумĕнчи историпе тавра пĕлӳ халăх музейне – çитсе куртăмăр.

Çирĕм çул ытла ăна Валентина Вастулова ертсе пырать. Аваллăх управçи çĕнĕрен чĕрĕлсе тăни шăпах Валентина Григорьевнăпа çыхăннă. Район музейне 1972 çулта ВЛКСМ Елчĕк райкомĕн секретарĕ пулнă Петр Сидоров пуçарăвĕпе уçнă. Паллах, малтанхи çулсенче вăл пĕчĕккĕн вăй илсе, ура çине «тăрса» пынă. Экспонатсем те çулсем иртнĕçемĕн йышланнă. Çĕнĕ хăватпа 1992 çулхи раштав уйăхĕнче «сывласа янă»: музей валли ятарлă çурт уйăрнă, шанчăклă ертӳçĕ тупнă. Халĕ акă çапла шухăшлатăп: енчен те ăна Валентина Григорьевнăна мар, урăххине шанса панă тăк ун шăпи мĕнлерех килсе тухатчĕ-ши?

Вастуловăна 1977 çултанпа пĕлетĕп. Ун чухне Немцева хушаматпа çӳретчĕ. Вăл – Елчĕк район хаçачĕн корреспонденчĕ, эпĕ – И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУн иккĕмĕш курс студентки «Колхоз ялавĕнче» практикăра. Çывăх туслашрăмăр. Валентина пилĕк çул редакцире ĕçлерĕ, качча тухса ача та çуратрĕ. Иккĕмĕш пепкине кун çути пама та хатĕрленетчĕ, анчах декрета редакцирен кайма май килмерĕ. Пĕчĕк ывăлне Тăрăн чиркĕвĕнче тĕне кĕртсе пысăк «преступлени» тунă. Шăпах çавăншăн айăпланă ăна, редакцире ĕçлеме паман.

Вăхăт иртнĕ, самана улшăннă. Тĕлĕнмелле те, хуçасем çеç пукансене улăштарнă. Валентинăна хăй вăхăтĕнче преступник тенĕ çынах ăна музей ĕçне шанса панă. Йăнăшман. Тĕрĕссипе, вăл ун пултарулăхĕпе ăсталăхне, тăрăшулăхĕпе ĕçченлĕхне малтанах витĕр курнă.

Халĕ иртнĕ тапхăр пирки Валентина Григорьевна усалпа аса илмест, редакцире ĕçлени района, унта пурăнакансене лайăх пĕлме пулăшнине палăртать. Çав самант ăна чунпа çирĕпленме, ăс-хакăлпа пиçĕхме май панă. Пĕр хушă ниçта та ĕçе илменрен таçта та «пырса тĕкĕнме» тивнĕ унăн. «Паха тĕрĕ» фабрикăн Аслă Елчĕкри филиалĕнче бригадирта ĕçлени малашлăхра пысăк усă кӳнĕ. Ун чухне района чăваш тĕррин ăсти Мария Симакова час-часах пырса çӳренĕ. Вастулова вăхăта усăсăр ирттермен, чăваш тĕррине алла илме хăнăхнă. Халĕ акă вун улттăмĕш çул ĕнтĕ музейре чăваш тĕррин кружокĕ ĕçлет. Ольга Яковлева, Надежда Левая, ыттисем, вĕсен амăшĕсем тав тăваççĕ Валентина Григорьевнăна.

Музейăн çĕнĕ çуртри кунçулĕ пирки унăн ертӳçи çапларах каласа кăтартрĕ. «Ăна мĕнле килет çапла мар, ăслăлăх концепцине тĕпе хурса йĕркелесе пытăмăр,– тет Валентина Вастулова. – Наци музейĕнчен Юрий Матросов художник ертсе пынă ушкăн ĕçлерĕ. Этнографи кĕтесне тунă чухне район тăрăх тепĕр хут çаврăнса тухма тиврĕ. Ӳнерçĕсем вир килли ыйтаççĕ. Чăваш Шуршăвĕнче тупрăм, анчах вăл – вутă купи айĕнче. «Вутта çунтарса пĕтерсен парса ярăп», – тет кил хуçи. Мана вара паян кирлĕ. Вутта çĕнĕ вырăна куçарса хума тиврĕ. Килĕ паян та музейра упранать. Пир тĕртмелли станок та, ал ĕç тумалли ытти хатĕр илсе килнĕ. Миçе çуртăн маччи çине хăпарса анман пулĕ. Халĕ музейра 5020 ытла экспонат».

Музей çурчĕ архитектура палăкĕ шутланать. Ăна, икĕ хутлăскере, 1909 çулта хăпартнă. Хуçи – вырăнти пуян Яков Беляев. Халăха çаратса тата хĕн кăтартса пуйман теççĕ ун пирки. Хăйсен йăхĕ ĕçчен те маттур пулнăмĕн. Çапах та совет самани савăнăç вырăнне куççулĕпе ытларах «сăйланă» иккен. Яков Павловича 1919 çулта хăйсен хапхи умĕнчех персе вĕлернĕ. Йăхне кулак тесе айăпланă, çуртне туртса илнĕ. Вăл чылай вăхăт пушă тăнă, каярах патшалăх банкĕ те пулнă, архив докуменчĕсене те упранă.

Беляевсен йăх тымарне тĕпчессипе музей специалисчĕсем нумай ĕçленĕ. Совет Союзĕн Геройĕ Александр Беляев та çав кăкранах. Александр Филиппович Елчĕкри икĕ креслă шкул хыççăн Чĕмпĕрте чăваш педтехникумне пĕтернĕ, унтан Новосибирскра учительте ĕçленĕ. Фрунзе ячĕллĕ çар академийĕнче ăс пухнă. 1943 çулхи раштав уйăхĕнче Днепр çывăхĕнчи çапăçусенчен пĕринче Беляев подполковник вилмеллех аманнă. Юлашки çапăçăвĕнчи паттăрлăхшăн ăна вилнĕ хыççăн Совет Союзĕн Геройĕн ятне панă.

2008 çулта Александр Беляев çуралнăранпа 100 çул çитнине районта савăнăçлă лару-тăрура паллă тунă, унта Герой хĕрĕ Светлана Александровна та хутшăннă. Александр Филиппович ӳкерме ăста пулнă иккен. Вăрçă вăхăтĕнче пурнăçланă темиçе ĕсне хĕрĕ музее парнеленĕ. Вăл Елчĕке ашшĕн 105 çулхи юбилейне те килсе кайнă. Шел, уяв хыççăн икĕ эрнерен çĕре кĕнĕ. Халĕ Беляевсен йăх йывăçне тăвас ĕçе Геройăн пиччĕшĕн ывăлĕ Андрей кӳлĕннĕмĕн.

Беляевсен Удмурт Республикинче пурăнакан тăхăмĕсем те Елчĕке çулленех килсе каяççĕ, несĕлĕсен çуртне типтерлĕ упранăшăн музей ĕçченĕсене тав тăваççĕ.


● Валентина Вастулова.





Çакна палăртни вырăнлă: çурта, тĕпрен илсен, музей ĕçченĕсем хăйсен тата спонсорсен вăйĕпе юсаççĕ. Ку енĕпе Валентина Григорьевна Владимирпа Лидия Зайламовсене ырăпа асăнчĕ. Предпринимательсем çулленех строительство материалĕсемпе пулăшаççĕ. Арçын ĕçĕсене мăшăрĕ тата ывăлĕсем туса параççĕ. Иртнĕ кĕркунне те вĕсен вăйĕпех çурта сăрласа илемлетнĕ.

Пĕччен хулă шăпăр мар теççĕ. Тĕрĕсех. Район шайĕнчи пысăк ĕçре пĕр шухăшлă пулса ĕçлени пĕлтерĕшлĕ. Ку енĕпе музей ертӳçи Валентина Вастулова тата Светлана Голубева лектор-экскурсовод район ертӳлĕхĕпе, культура пайĕпе канашласа, пĕрпĕрне пулăшса ĕçлеççĕ.

Аваллăх управçи мĕнпе илĕртме пултарать? Пĕр енĕ – манăçа юлнă аваллăха çĕнĕрен тавăрни. Çавна май «Музейри каç» акцие палăртса хăвармалла. Виçĕ-тăватă çул каялла экспонатсене «чĕртсе» тăратнинчен пуçăннă çак ĕçе. Чи малтанах хут пĕлменлĕхе пĕтерес тĕлĕшпе мĕнле вăй хунине кăтартса парас тенĕ. Çав «кăтартура» ачасене чернилпа çырма «вĕрентни» уйрăмах кăсăклă пулнă. Пионера, комсомола илнине сăнласа кăтартни те тĕлĕнтернĕ. «Елчĕк пасарĕ» панно тĕлĕнче чăн-чăн пасар хуçалланнă тейĕн. «Этнографи залĕнче» пир станокне, хресчен хуçалăхĕнчи пур япалана та тĕкĕнсе, алла тытса пăхма ирĕк панă. Кăмăл тăвакансем хăйсем пир тĕртме пултарнă. «Ĕлĕкхи кил-çурт тавраш» пайра патефон авалхи юрăсене шăрантарнă.

Тепĕр çулĕнчи «Музей каçĕнче» тĕрĕ ăстисем хуçаланнă. Çын урамра туллиех пулнă: тĕрлекенĕсем те, вĕсен ĕçĕпе киленес текенĕсем те. Вера Филиппова, Галина Чернова, Зинаида Обручкова, Елена Федорова, Елена Моисеева, Елена Козлова тата Екатерина Мартынова йăла юррисене тăсса янă, хĕрсем салтака каякан каччисем валли парне – сăмса тутри – хатĕрлеме ларнă.

Çав каçах музей кил картинче район территорийĕнче çитĕнекен 16 тĕрлĕ курăкран чей вĕретсе ĕçнĕ. Сăмавар пăс кăларса ларнă вăхăтра та юрă-кĕвĕ янăранă. Кăçал вара Музей кунĕнче велочупу ирттерчĕç. Истори, культура, архитектура тĕлĕшĕнчен паллă палăксем патне çитсе килчĕç.

Эпир пынă кун музей ĕçченĕсем Аслă Çĕнтерӳ кунĕ тĕлне çĕнĕ стенд, курав хатĕрлетчĕç. Валентина Григорьевна фронтра связистка пулнă Нина Смирновăн вăрçăри япалисене кăтартрĕ. Нина Николаевна районти Акчел ялĕнче çуралса ӳснĕ, фронта та унтанах кайнă. Çĕнтерӳ хыççăн та тăван ялнех таврăннă. Телейне вара вăрçă хирĕнче хăварнă. Приморье крайĕнче ӳссе çитĕннĕ каччăпа паллашнă чăваш хĕрĕ, анчах Митьăпа пĕрле пулма турă пӳрмен-мĕн ăна. Салтак аманнă ахăр, сипленнĕ хыççăн ăна урăх вырăна янă. Юратупа тулнă чĕресем малалла çырупа çыхăну тытма пуçланă. Вăрçă чарăнасса, мирлĕ пурнăç çитессе чăтăмсăррăн кĕтнĕ, туй тума ĕмĕтленнĕ. Çакна йĕкĕтĕн çырăвĕсем ĕнентереççĕ. Анчах Митя пĕр çапăçуран чĕрĕ тухайман. Нина юратнă каччине хăй çĕре кĕрикченех кĕтнĕ, урăх нихăш арçынна та «юрататăп» тесе каламан. Вăрçă, вут-çулăм алхасать, çамрăк чĕре çавах юратушăн тунсăхлать. Акă Нина Смирновăн фронтри пĕчĕк чăматанĕнче юратупа хĕмленсе тăракан çырусемпе открыткăсем çеç мар, куçкĕски те, пудра та пулнă. Вăрçă, хаяр та ирсĕр пулсан та, юратма чарайман. Чуна пырса тивекен çакăн пек куравсемшĕн, чĕрĕ ас тăвăмшăн тав аваллăх управçисене. Çулталăкра темиçе хут çĕнетеççĕ вĕсем стендсене. Паллă пĕр-пĕр пулăмпа çыхăннисем те, тăван район ывăлхĕрне халалланисем те «çуралаççĕ».

Çак вăхăтра музейра ял ачисем валли кăсăклă тепĕр курав ĕçлет. Сăмахăм – Шупашкарта пурăнакан Виссарион Лосманов пухса хатĕрленĕ лĕпĕшсен коллекцийĕ пирки. Кураврă – тĕнчери 5 пин ытла лĕпĕш, нăрă тата ытти те.

Валентина Григорьевна пирки районта «пирĕн утса çӳрекен энциклопеди» теççĕ. Çак хисепе, паллах, тивĕçмелле. Вăл вара, лара-тăра пĕлменскер, яланах шыравра, ĕçре. Республика, район конкурсĕсене хастар хутшăнать. Акă «Музей – пĕр йышшисен мар пĕрлĕхĕ» конкурсра /ăна 2008 çулта Чăваш наци музейĕ йĕркеленĕ/ «Музей тата массăллă информаци хатĕрĕсем» номинацире пĕрремĕш вырăна тухнă. Республикăри Халăх пултарулăх çурчĕ ирттернĕ «Çĕр пин тĕрĕ çĕр-шывĕнче» конкурсра висçĕмĕш пулнă.

Район историне тĕпчени, архив материалĕсемпе тимлĕ ĕçлени сумлă статьясемпе очерксем çырма пулăшаççĕ ăна. Валентина Вастулова «Елчĕк тăрăхĕ», «Яльчикский район. Краткая энциклопедия» кĕнекесен авторĕсенчен пĕри. Общество тивĕçĕ те нумай. Вăл – Чăваш наци конгресĕн Елчĕк районĕнчи уйрăмĕн председателĕ, культура ĕçченĕсен профсоюз комитечĕн председателĕ, хĕрарăмсен «Варкăш» ансамблĕн членĕ.

Ырă йывăç усал çимĕç кӳмест теççĕ халăхра. Валентина Григорьевнăна та ырă ĕçĕсемшĕн тимлĕхсĕр хăварман: Хисеп хучĕсемпе, Тав çырăвĕсемпе наградăланă. Район, республика шайĕнчисем çеç мар, Раççей Культура министерствин Хисеп грамоти те пур унăн. Паллах, ят-сумшăн мар, чĕри ыйтнипе, хушнипе, ертӳçĕсем шаннипе кӳлĕннĕ вăл çăмăл мар çак ĕçе. Чыс та мухтав ентешĕмĕре.

■ **Надежда СМИРНОВА**

● ➡ 11, 12 стр.

ХЫПАР



Самана таппи

# «Агро-Инноваци» – ял хуçалăхĕнчи çĕнĕлĕхшĕн

*Çулсем иртнĕçемĕн ăслăлăх çитĕнĕвĕсене пула халăх хуçалăхĕн отраслĕсем ӳсĕмлĕ аталаннине кашниех асăрхать пулĕ. Юлашки вăхăтра ял хуçалăхĕнче те пĕлтерĕшлĕ улшăнусем пулчĕç. Европăри, чикĕ леш енчи çĕр-шывсенчи паха опыта анлă çул парса хресчен тухăçлă меслетсемпе производствăра усă курать. Сахал йышпах продукци ытларах туса илме, çавна май унăн хăй хаклăхне чакарма вĕренчĕ. Ял хуçалăх пĕрлешĕвĕсенче машина-трактор паркĕ энерги перекетлекен техникăпа çулсерен пуянланать. Çак çĕнĕлĕхсем, наука çитĕнĕвĕсем производствăна, ахăртнех, хăйсем тĕллĕнех пырса кĕреймен. Кунта, паллах, аграри консультанчĕсем, специалисчĕсем пысăк тӳпе хывни пĕлтерĕшлĕ. Республика ертӳлĕхĕ вĕсене пĕрлештерекен предприяти кирлине вăхăтра ăнланса илнĕ.*




• *Чăваш Республикин делегацийĕ 2013 çулта Словаки Республикинче иртнĕ куравра.*

2004 çулхи çу уйăхĕн 26-мĕшĕнче ЧР Министрсен Кабинечĕн йышăнăвĕпе Чăваш Енре «Агро-Инноваци» хысна унитари предприятине туса хунă. Тĕллевне малтанах тĕплĕ палăртнă: республикăри ял хуçалăх пĕрлешĕвĕсене наука тĕпчесе-тĕрĕслесе йышăннă меслетсене, малта пыракан тĕп шухăшсемпе технологисене ĕçе кĕртсе тухăçлă усă курма, ял хуçалăх таварĕ туса илекенсен пĕр-пĕринпе тупăшаслăхне аталантарма, агропромышленноç комплексĕн рынок информацийĕн тухăçлă тытăмне туса хума пулăшасси. Коллектива биологи наукисен кандидачĕ, доцент, Чăваш Республикин ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Николай Васильев ертсе пырать.

ХУП ЧР Ял хуçалăх, Финанс, Экономика аталанăвĕн, промышленноçпа суту-илӳ министерствисемпе килĕштерсе çулленех çулталăклăха çирĕплетекен ятарлă программăпа ăнăçлă ĕçлет. Палăртнă тĕллев епле пурнăçланни çинчен ЧР Ял хуçалăх министерствине кашни кварталрах пĕлтерет.

«Агро-Инноваци» ĕçе хастар пуçăннă, 2005 çултах 12 семинар, 8 çул çӳрев ирттернĕ. Вĕсене агропромышленноç комплексĕн 518 ертӳçипе специалисчĕ хутшăннă, ял хуçалăх производствине ку чухнехи çĕнĕ меслетсемпе тытса пырас ăсталăха вĕреннĕ, лекцисенче илнĕ пĕлĕве Раççей Федерацийĕнчи, çывăх кӳршĕллĕ çĕр-шывсенчи малта пыракан хуçалăхсене çитсе производствăри çĕнĕлĕхсемпе паллашса çирĕплетнĕ.

2005 çул валли йышăннă программăпа килĕшӳллĕн предприяти ял хуçалăх таварĕ туса илекенсене сервис пулăшăвĕ паракан машина-технологи станцийĕ йĕркелессипе çыхăннă мероприятие, акма-лартма тăпра хатĕрленĕ чухне усă курма ресурс перекетлекен технологие туса хатĕрленĕ тата ĕçе те кĕртнĕ.

Майракаллă шултра выльăха витере çыхса тăратмасăр усрани продуктивлăха ӳстерме, çавна май унăн хăй хаклăхне чакарма май панине темиçе фермăра сăнав ирттерсе ĕнентернĕ.

Хысна унитари предприятийĕ 10 çулта ик çĕре яхăн семинар ирттернĕ, вĕсене 7858 çын хутшăннă. Вĕсем Словакири, Нидерландри, Украинăри, хамăр çĕр-шыври вăйлă аталаннă ял хуçалăх предприятийĕсене, хресчен-фермер хуçалăхĕсене çитсе курнă. Чăваш Енри аграрисем 2008 çултан пуçласа пĕтĕм тĕнчери выльăх-чĕрлĕх тата ăратлăх ĕçĕн ятарлă куравне çулленех хутшăнаççĕ.

Тăпрари нӳрĕке упрас, çум курăкпа кĕрешес тата тухăç илес енĕпе йăлана кĕнĕ тата ресурс перекетлекен технологисене пĕр-пĕринпе танлаштарнă та çапла пĕтĕмлетӳ тунă: çурхи тулă туса илмешкĕн ресурс перекетлекен технологи топливăна 22% перекетлет. Пĕр центнер тырăн хăй хаклăхĕ 32,5 тенкĕ йӳнĕрех.

Етĕрне районĕнчи «Ленинская искра» сăнавпа кăтарту хуçалăхĕ» колхозра, Вăрнар районĕнчи «Санар» агрофирма» ООOра ирттернĕ тĕслĕхсем биогумуспа усă курни уй-хирте экологи енчен таса çимĕç туса илме май пуррине кăтартса панă. Çурхи тулăра – клейковина, çĕр улмире типĕ япала, крахмал виçи ӳснĕ, нитрат шайĕ 2 хут чакнă.

Тăпрана çавăрса пăрахса сухалас вырăнне тарăн кăпăшкалатса хăварни те пĕлтерĕшлĕ. Минерал удобренине вăрлăхпа пĕрле ӳсен-тăрана аталанмашкăн çеç шутлă хывнăран /точное земледелие/ «Санар» агрофирма» ООOри сăнав уйĕнче çĕр улми гектартан 419 центнер тухнă, ахальлинче – 354; пĕрчĕллĕ культура – 49,5 центнер, сăнав ирттермен лаптăкра вара – чылай сахалрах.

Çĕнĕ технологи тухăçа ӳстернипе пĕрлех удобрение нумай перекетлеме, продукци хăй хаклăхне пĕчĕклетме май парать. Тĕпчев тырă тухăçĕн 90% – 3-мĕш, ытти 2-мĕш класа ларнине палăртнă.

ХУП специалисчĕсем Патăрьел районĕнчи «Красное знамя» ЯХПКра темиçе те пулнă, сĕт туса илес, выльăх апачĕ хатĕрлес, пĕрчĕллĕ культурăсем çитĕнтерес енĕпе çине-çинех консультаци панă. Специалистсем сĕннипе хатĕрленĕ сенажа пула ĕнесем хĕлле ахаль апат çитернипе танлаштарсан талăкра 2 килограмм ытларах сĕт панă.

Предприяти инвестици проекчĕсен, хуçалăх ертӳçисене суйламалли конкурссен бизнес-планне те хатĕрлет. «Етĕрне-сĕт», «Вăрнарти аш-какай комбиначĕ», «Акконд-агро», «Юрма» агрохолдинг» ООOсемпе ытти ял хуçалăх предприятийĕсенче ХУП хатĕрленĕ бизнес-плансене ăнăçлă ĕçе кĕртнĕ тата инвестици проекчĕсене пурнăçланă. Пур объектра та çĕнĕ технологисемпе анлă усă кураççĕ. Ял хуçалăх производствинче инноваци хатĕрлевĕ анлăрах сарăлтăр, информаципе паллашчăр тесе сайт уçнă.

Ял хуçалăх продукцийĕн, минерал удобрени, ӳсен-тăрана хӳтĕлекен хими хатĕрĕсен, çунтармаллисĕрмелли материалсен хакĕсен мониторингĕ кашни эрнерех иртет.

«Агро-Инноваци» ӳсен-тăран ĕçĕнче, выльăх-чĕрлĕх отраслĕнче усă курма ресурс перекетлекен технологисен 9 меслет сĕнĕвне хатĕрленĕ. Унăн ят-сумĕ «АПК аталанăвĕ» наци проекчĕ, «2008-2012 çулсенче ЧР агропромышленноç комплексĕн аталанăвĕ тата ял хуçалăх продукцийĕн, чĕр таварпа апат-çимĕç рынокне йĕркелесси» патшалăх программи ĕçленĕ тапхăрта уйрăмах ӳсрĕ.

ХУП «Регионсем – чикĕсĕр килĕштерсе ĕçлесси» куравра ЧР Ял хуçалăх министерствин тĕп экспозицине хатĕрлеме хутшăннă, 2 диплома тивĕçнĕ. 2005 çултанпа çулленех чи лайăх 100 ял хуçалăх пĕрлешĕвĕ «Агро-100» клубăн мониторингне, 2009 çултанпа Раççей Ял хуçалăх министерстви пулăшăвĕпе «Çĕр улми» куравне ирттерет.

Саккăрмĕш çул кашни кварталта пĕрре «Агро-Инноваци» журнал тухать /редакторĕ – Нина Степанова/. 2009 çулта вăл облаçсемпе районсенчи массăллă информаци хатĕрĕсен Пĕтĕм Раççей конкурсĕн призерĕ пулнă. Журналăн пĕтĕм тиражĕ АПК ĕçченĕсен хушшинче хăвăрт саланать.

«Ĕçе пуçăнакан фермер», «Çемье выльăх-чĕрлĕх фермми» тĕллевлĕ программăсене хутшăнакансене предприяти специалисчĕсем виçĕ çул ырă сĕнӳ-канашпа, бизнес-плансем хатĕрлеме пулăшнă.

Паянхи кун «Агро-Инноваци» республикăри агропромышленноç комплексĕн организацийĕсене пысăк витĕм кӳнĕ май пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлекен информаци-консультаци центрĕсен пĕрлĕхĕ шутланать, хăйĕн тĕллевне чыслă пурнăçлать.



• *Николай Васильев директор регионсенчен килнĕ информаци-консультаци служби ертӳçисене «Агро-Инновацин» тĕпчев лабораторийĕпе паллаштарать.*

**Валентин ГРИГОРЬЕВ.**

Сăн ӳкерчĕксене "Агро-Инноваци" архивĕнчен илнĕ

Пĕтĕм тĕнчери VII кинофестиваль

# Наци кинематографĕн çулĕ такăрланĕ-и?

*Наци библиотекинче наци киностудийĕсен фильмĕсен конкурсĕн председателĕ Елена Стишова, Сергей Анашкин кинокритик журналистсемпе, киноискусство ĕçченĕсемпе тĕл пулчĕç, наци кинематографĕн çивĕч ыйтăвĕсене сӳтсе яврĕç.*

Шупашкар кинофестивальне сахал йышлă халăхсен кинематографне халалланă. Çакă чăннипех тӳрре тухрĕ: конкурса наци киностудийĕсен 14 фильмĕ хутшăннă. Бурятсем, якутсем, тутарсем, хакассем, македонсем... хăйсен ĕçĕсемпе паллаштарчĕç. Кинофестивалĕн историйĕнче пĕрремĕш хут çак йышра чăвашсем те пур. Андрей Васильев режиссерăн "Нарспи" музыка фильмĕ конкурса хутшăнчĕ. Çавăн пекех конкурс тулашĕнче чăваш кинематографисчĕсен /В.Карсаков, В.Оринов, А.Степанов-Пăртта, В.Синяев/ чăвашла ӳкернĕ фильмĕсене кăтартрĕç.

Сергей Анашкин регионсем хатĕрлекен фильмсене хакланă май "мĕн пур халăхăн фильмĕсем пĕрешкелрех темăсене çутатнине" палăртрĕ. "Фильм урлă халăх сăмахне, шухăшне палăртма пултарни уйрăмах пĕлтерĕшлĕ", – терĕ вăл. Елена Стишова унăн шухăшне малалла тăсрĕ: "Хăйне евĕрлĕхне кăтартма тăрăшни сисĕнет. Вăл е ку халăхшăн тăван йăла-йĕркене, сăнсене курма май пурри пĕлтерĕшлĕ".

"Çавра сĕтеле" якутсен пултарулăх ушкăнĕ те хутшăнчĕ. Вĕсем конкурса темиçе фильм тăратнă. Пахалăхĕ начар мар, Шупашкар çыннисене те килĕшнĕ вĕсем.

– Якутсене çине-çине ӳкерме мĕн хистет?

– Куракан, – татăклăн палăртрĕ Марианна Скрыбыкина продюсер. – Çынсем кино курасшăн, вĕсене интереслĕ.

– Чиновниксем пăхаççĕ-и?

– Паллах. Пĕтĕмпех хăрушă фильмсенчен пуçланчĕ. Халăх историйĕпе çыхăнтарса ӳкернĕскерсем çынсене кăсăклантарса ячĕç. Паллах, ăнăçу тӳперен йăтăнса аннă тееймĕн. Пăтăрмахлă самант та сахал мар пулнă. Халĕ ăнланатпăр: тăкак ытларах пулин те пахалăх чи пĕрремĕш вырăнта пулмалла.

Якут кинематографĕсене патшалăх тĕрев парать. Нумаях мар пулин те пулăшу сисĕннине палăртаççĕ режиссерсем. Пуçарулăх, тăрăшулăх та çула уçать. Акă Вячеслав Семенов тĕслĕхĕ пĕчĕк ушкăнпа е пĕччен те пысăк ĕçсем тума май пуррине çирĕплетет. Вăл хăйех сценарист та, режиссер та, оператор та. Вăл вун пĕр документлă, тулли – пĕр, кĕске метражлă виçĕ илемлĕ фильмсем ӳкернĕ.

Якутсем çынсене кино патне туртăнтарма пултарни тĕлĕнтерчĕ паллах. Пухăннисене самай калаçтарчĕ. "Якутсем хăйне евĕрлĕ "утрав" çинче пурăнаççĕ, унта пуйăссем çӳремеççĕ, – терĕ Сергей Анашкин. – Вĕсен хăйсен тĕнчи. Иртнĕ ĕмĕрĕн 80-мĕш çулĕсенче кунта якут сăмахĕ илтĕнмен. Паян вара тăван чĕлхепе ирĕклĕнех калаçаççĕ".

Хальхи вăхăтра кинотеатрсене çӳрекен питĕ сахал. Аслăрах ӳсĕмрисем телевизор умĕнче ларма кăмăлласçĕ, çамрăксем Интернетпа кино пăхаççĕ. Фильмшăн никамăнах та укçа тӳлес килмест. Çакă вара кино ӳкерессине пĕтсе ларасси патне илсе çитересси куç кĕрет. Акă, сăмахран, чăваш кинофильмĕсене пысăк экранпа кăтартма пуçласан курма çӳрекен пулĕ-ши?

Икĕ-виçĕ уйăх каялла чăваш кинематографисчĕсем пĕрлешсе союз йĕркелерĕç, пысăк тĕллевсем палăртаççĕ. ЧР Культура министерстви те вĕсене пулăшма хатĕр. "Кăçал Шупашкарта хамăрăн кинорежиссерсен ĕçĕсен фестивальне ирттересшĕн, – каласа кăтартрĕ союз ертӳçи Олег Цыпленков. – Çĕнтерӳçе килес çул тĕп хулара иртекен саккăрмĕш кинофестивале хутшăнтарасшăн".

Пысăк экран тенĕрен... Унта çитме çăмăлах мар иккен. ЧР культура министрĕн çумĕ Т.Казакова каланă тăрăх – темиçе çул каялла пĕр çамрăк çакăн пек пуçарупа тухнă иккен. Анчах саккунпа килĕшӳллĕн РФ Культура министерстви ирĕк памасăр фильма республикăра кăтартма ниепле те май килмест. Аталанăва ура хуракан тепĕр самант. Ăна сирме май çук тееймĕн, çапах та...

Чăваш кинематографисчĕсене те, ыттисене те паянхи кăткăс пурнăçра пĕлтерĕшлĕ ĕçсем хатĕрлеме çăмăл мар. Укçа-тенкĕ çитменни, влаç ăнланманни... Чылай чухне "телей хӳрине" ярса илесси хăвна хăв шаннинчен нумай килет.

– "Пресвятая Богородица, спаси нас!" фильм /вăл конкурса хутшăннă/ – манăн пĕрремĕш ĕçĕм. Ăна ӳкерме кредит илтĕм, пачăшкă пулăшрĕ, спонсорсем пая кĕчĕç, – чун пăшăрханăвне уçса пачĕ Македонирен килнĕ Весна Димитрова-Бобевски режиссер тата актриса. – Çавăнпа пысăк ĕçсем хатĕрлеме питĕ йывăр.

Бурят режиссерĕ Солбон Лыгденов /унăн "Булаг" фильмĕ конкурса хутшăннă/ вара хăйĕн "чун çимĕçне" кун çути кăтартма... хваттерне сутнă. Юрий Курочка режиссер, оператор, продюсер та пухăннисене самай кăсăклантарчĕ. Красноярск крайĕнче çуралса ӳснĕ вырăс 2008 çулта киностуди йĕркеленĕ, хакас наци культурине халалланă фильмсем ӳкерет. Çак халăх мĕнпе илĕртет-ха ăна?

– Кунти тавралăх пилĕк пин çул каяллахи илеме, хăйне евĕрлĕхне упраса хăварма пултарнă. Вăл кирек кама та кăсăклантарĕ. Кунти тĕлĕнмелле япаласене курсан ирĕксĕрех юратса пăрахатăн... – чунне уçрĕ Ю.Курочка.

Сахал йышлă халăхсен кинематографĕн чи çивĕч ыйтăвĕ нухрат çукки, патшалăх пулăшма васкаманни. Калаçу аталаннă май пĕтĕмлетӳллĕ çакнашкал шухăш тĕвĕленчĕ. Унпа С.Анашкин та килĕшрĕ: "Влаç тĕрев памасть, теприсем тата çак ĕç-хĕле пĕлтерĕшсĕр тесе шухăшлаççĕ". Чăваш Енре пăр тапранчĕ темелле-ши? Юлашки вăхăтра влаç органĕсем киноискусствăна чĕртсе тăратасси патшалăх тивĕçĕ те пулнине ăнланса илни сисĕнме пуçларĕ. Çакă культура министрĕн çумĕн Т.Казаковăн сăмахĕнчен те аванах палăрчĕ. Вăл паянхи кăткăс лару-тăру пирки пăшăрханса калаçрĕ: "Министерствăра кино енĕпе ĕçлекен пай та, специалист та çук. Культура институтĕнче çак тытăмра ĕçлеме пултаракансене хатĕрлеме пуçлас... Кам вĕрентĕ вĕсене? Çамрăксене Питĕре, Мускава, ытти хулана пĕлӳ илме ярас... Анчах каялла таврăнĕç-и-ха вĕсем?"

Паллах, Шупашкарта çиччĕмĕш хут иртекен халăхсен хушшинчи кинофестиваль республикăн культура пурнăçне пуянлатни, ят-сума ӳстерни куç кĕрет. Чăваш Республикине тата мĕн ырри пама пултарать-ха вăл? Елена Стишова шухăшĕпе – "унăн çутипе республика Пуçлăхне хĕмлентерме, кăмăлне çавăрма пултарни чăваш наци кинематографне аталанма хăват пама тивĕç". Çаплах пуласса шанатпăр.

**Валентина БАГАДЕРОВА**



kino-cap.ru сайтĕн сăн ӳкерчĕкĕ




Геннадий ВЕРБЛЮДОВ сăн ӳкерчĕкĕ

Спорт

# Универсиада пулас кооператорсене пухрĕ

***Ĕнер Шупашкарти коопераци институтĕнче Раççей коопераци университечĕн студенчĕсен çуллахи Универсиади пуçланчĕ.***

Чăваш Ене Мускав, Волгоград, Хусан, Саранск, Краснодар, Сарă ту облаçĕнчи Энгельс хулисенчен 350 ытла студент килнĕ. Савăнăçлă парадра хăнасемпе спортсменсене Раççей коопераци университечĕн ректорĕ Владимир Кривошей, Шупашкарти коопераци институчĕн ректорĕ Валерий Андреев, ЧР физкультурăпа спорт министрĕн çумĕ Сергей Шелтуков, Чăвашпотребсоюз канашĕн ертӳçи Валерий Павлов, ЧР Патшалăх Канашĕн комитечĕн председателĕ Николай Малов, Раççей спортăн тава тивĕçлĕ мастерĕсем Олимпиада Иванова, Ольга Егорова, Владимир Андреев тата ыттисем саламларĕç.

Икĕ кунра студентсем спортăн тĕрлĕ енĕпе тупăшĕç: хĕрсемпе каччăсен командисем баскетбол, волейбол, мини-футбол, сĕтелçи теннис турнирĕсенче ăмăртĕç, атлетсем кросра тата эстафетăра мала тухассишĕн кĕрешĕç, каратистсем университет чемпионĕн ятне çĕнсе илессишĕн вăй виçĕç. Пултарулăх коллективĕсемпе ушкăнĕсем «Раççей коопераци университечĕн çĕр таланчĕ» фестивальте хăйсен пултарулăхĕпе паллаштарĕç.

Тĕплĕнрех – ытлари кунхи номерте.

**А.МИХАЙЛОВ.**

КУЛЬТУРА

*Хаклав*

# Литературăри паянхи ял тата хула çамрăкĕн сăнарĕ

***Ку таранччен чăвашла пичетленнĕ хулăнрах ĕçсенче – роман-повеçре, новелла- калавра – ытларах халĕ те колхоз тата вăрçă тематики сăнланни палăрать[1] . Ятарласа хушаматпах асăнмасан та – «Тăван Атăлăн» кашни номерĕнче тенĕ пекех çакна асăрхатăн. Ку, паллах, хăй вăхăтĕнче вĕсем пирĕн чĕремĕрсенче тата чунăмăр-кăмăлăмăрсенче çав тери тарăн йĕр, тен, суран та хăварнăран килет пулĕ. Юлашки вăхăтра, те çанталăкăн варкăш çилĕ самай улшăннăран, те урăхларах сăлтавсене пула, кун йышши хайлавсем ытлашши вуланасшăнах мар. Вĕсемпе паллашнă хыççăн та, темшĕн-çке, чылайăшĕ асра юлмасть, сăнарĕсем те таçта кайса çухалаççĕ. Тен, ялан пĕр япала çинчен вулани е калани йăлăхтарать, чун çĕнни е урăххи патнелле туртать.***

Аллăма Е.Г.Алексеевăн «Телей çăлтăрĕ хыççăн» калав-хайлав пуххи лекрĕ. Кĕнекен ятарласа палăртнă умĕнхи кĕске аннотацийĕнче çапла каланă: «...çамрăк авторăн тĕрлĕ çулта çырнă çирĕм ултă калавĕ кĕнĕ. Вĕсенче чăваш хĕрарăмĕн шăпи, нуши-терчĕ, савăнăçĕ, телейĕ уççăнах палăрать... Чăваш килйышĕн тĕп пуянлăхĕ ачасем тата хисеплĕ шур сухалсем пулнине çирĕплетет çыравçă. Кунтах çамрăксен пурнăç ыйтăвĕсене хускатса çырнă хайлав та чылай. Вĕсен çунатлă ĕмĕчĕсем, таса туйăмĕ урлă хастар яшсемпе хĕрсен, хаваслă та малалла ăнтăлакан студентсен тĕрлĕ енлĕ пурнăçне сăнласа парать».

Паянхи ял çыннин нуши-терчĕ те, хуйхипе савăнăçĕ те, кăмăл-сипечĕ те, малашлăхĕпуласлăхĕ те, иртни-авалхи те ансат сюжетлă тĕрлĕ калавра лайăх курăнать. Акă вĕсен хăшĕпĕрисен ячĕсем: «Ылтăн кин», «Читлĕхри чĕре», «Илĕртӳллĕ шырав», «Ялăм ман салама йышăнать» */«çуллахи кану вăхăтне тăван тăрăхăмра иртternĕрен унти кулленхи пурнăç саккунĕсем çинчен хайлас килчĕ, 99 стр./,* «Анне, эп таврăнтăм»... Вуланăçемĕн вĕсенчи сăнарсен ĕç-хĕлне çывăх туйма пуçлатпăр: килтисене аса илетпĕр, хамăрпа пулнисене танлаштаратпăр, малаллахи пирки ĕмĕтленетпĕр. Чылай чухне пĕр-пĕр калав питĕ хăвăрт вĕçленнипе килĕшмесĕр, утланнă лаша сиккипе пынă чух хăвăрт чарăнсан эпир малалла мĕнле вĕççе каятпăр – шухăшсем çавăн пекех тăп чарăнаççĕ, çавăнпа та автор хăй каласа панин е пĕр-пĕр лирика сăнарĕн ĕç-пуçĕ мĕнле аталанса пынине пĕлеймесĕрех юлатпăр. Ку вăл çак çыравçăн хăйне евĕрлĕ вăрттăнлăхĕ е тата – урăххи. Вĕсене калавçăавтор пачах васкаса çырман пек туйăнать – эппин, вĕсенче сахал шухăшпа-сюжетпа-сăнарпа Е.Г.Алексеева çамрăк çыравçă пулин те, чăваш пурнăçĕнчи уççи-хуппине лайăх пĕлнине, чылай чухне пурнăç кĕнекине мĕнле уçмаллине ытарлăн вĕрентсе, вулакана çывăх материала сăмахпа ӳкерчĕклесе кĕртсе хума пултарнă.

Вырăс литературинче çакăн пек ансат сюжетлă новеллăсем Виктория Токаревăн пур. Елена Алексеева чăвашла çырнинче те хальхи пурнăçăн арăш-пирĕшĕ тĕрлĕ сăнарта сăнланнă: телейсĕр е ăнăçсăр юрату, телейсĕр арăм е ăнăçсăр упăшка, телейсĕр е ăнăçсăр хуняма, телейсĕр е ăнăçсăр çемье, телейсĕр е ăнăçсăр шăпа, паянхи пурнăçăн тӳнтерĕпе пиченĕ тата çак ретрех чи хăрушши, калама та, çырма та питĕ йывăр – вăл телейсĕр /эрех-сăра пички ăшне путнине пула/ чăваш хĕрарăмĕ /е анне – нуша айĕнчен ниепле те хуппипе уççине тупаймасăр кун кунласа тапаланакансkер, çав хушăрах ачи-пăчине выçăллă-тутăллă çитĕнтерекенскер/. Эпир чăваш хĕрарăмне ниепле те хисеплеме хăнăхаймарăмăр-ха. Ку вăл авалтан килекен пулăм-ши е пирĕн халĕ те чылай чухне вырăнтах тапăлтатакан культура шайĕ-ши? Темшĕн ялан тенĕ пекех паллă пĕр ӳнерçĕ çапла калани аса килет: «Чăвашсем пек нихăш халăх та хăйĕн хĕрарăмĕнчен çапла кулмасть...».

Атăлçи тата Урал çум тăрăхĕнчи чăвашсен хальхи йăли-йĕркине /туй, ача пăтти, çуралнă кун тата ыт.те/ ĕненмелле çырса кăтартнă автор. Паянхи чăваш интеллигенцийĕн шухăш-кăмăлĕ те палăрать кунта. Тен, çакăн йышши пĕтĕмлетӳсем те палăртма пулать: арçынсен талккăшĕ – куллен нухрат кӳрекен банк, килти хуçалăх; хĕрарăмсен талккăшĕ – тĕпел, апат-çимĕç, ача-пăча; паянхи арçынсен пуянлăхĕ – ĕçлĕх, ĕçкĕлĕх, хаярлăх, вăрçаслăх, ултавлăх, «аçалăх»; паянхи хĕрарăмсен паллă енĕсем – ыр кăмăллăх, тасалăх, юратулăхпа юратаслăх... Уйрăмах çамрăк çемьесемшĕн йывăр та тумхахлă, тавлашуллă та ним çук çĕртренех вăрçăнуллă /сăлтавне чылай чухне тавçăратпăр-ха/ вăл. Ялти тата хулари чăвашăн пурнăçĕ! Эпир ăна туллин тишкермен те! Асăннă кĕнекерен çакă та лайăх курăнать: çав хушăрах ĕçлеме-шухăшлама-талпăнма ӳркенменнисемшĕн, хăрамасăр ĕç вырăнĕ улăштарма, хăйĕн ĕçне пуçлама хавхаланакансемшĕн вăл ăнăçлах тата тупăшлах /паллах, черкке хыççăн хăваламаççĕ пулсан/. Вĕсен çурт-йĕрĕ те, кил-картишĕ те, хваттерĕ-пӳлĕмĕ те куççульпе мар, савăнăçпа, мăнаçлăхпа, ырăлăхпа тулнă.

Ку таранччен никам та «телей» сăмахăн тулли пĕлтерĕшне уçса паман. Чылай чухне вара пĕтĕмлетсе çавăрттарса татăклăн каланисем – ăслă тата аслă çынсен каларăшĕсем. Паллах, кашни çыннăн хăйĕн телей картлашки.

Нумай чухне пурăнса нушталаннă çыннăн телей кайăкĕ таçта аякка тăрса юлать пулас та /темшĕн-çке асра юлаканĕ вара пурнăçра лайăххи мар, начарри/ – çавăнпа та вăл ун çинчен хавхалансах каласа парасшăн мар. Телей çăлтăрĕ патне çитме телей кайăкне тытмалла. Телей кайăкĕн хăйĕн юратнă йăви пур пулас: çавăн тĕлне тĕрĕс тухма çирĕп вăй-хăват та, анлă пĕлӳ те, пурне те тивĕçтерекен /çывăх тăвансене, юратнă çынсене, пĕрле ĕçлекенсене те.../ хисепсипетлĕх, ыр кăмăллăх, чун анлăшĕ кирлĕ. Асăннă кĕнекери калавсенче вара вĕсене вулакан тупатех.

Чĕлхеçĕ валли те каламалли çителĕклех кĕнекере. Акă калькăласа çавăрттарса калăпланă шухăш калавсенче тăтăш тĕл пулать: *«васкакан вакка чăмнă»*



/13 стр./, *«ачана сыватса «сусăрлăх» çинчен илтеретĕп»* /41стр./, *«юратакансемшĕн хӳшĕре те çăтмах»* /76 стр./, *«юратакансене çухрăмсем уйăрса ярайменĕç»* /93 стр./, *«чĕрене хушма çук»* /138 стр./, *«кĕрен шăши пулса çитĕ», «ĕмĕр сакки сарлака»...* Çыравçăн, паллах, хăйĕн стильне палăртакан сăмахсем те пулмаллах, вĕсене те эпир калавсенче куратпăр: *ĕçтеç-ӳкерӳçĕ, пуççавăрттармăш, маскăсен балĕ, пашлăклă пальто, «ман ыльăмсем, куçуксем», манит* тата ыт.те. Ваттисен сăмахĕсемпе каларăшсем те питĕ кăсăклă: *«ыйхăн пĕр крепенкки те, пĕр пăчĕ те виçĕ пус», «арçын ĕçĕ – ана çинче, хĕрарăм ĕçĕ – сĕтел çинче», «тăм кӳлепе пек тепĕр хут унаса кăлараймăн», «вĕсем ылтăн тусем мар, юратуллă лăпкă пурнăç шантаратчĕç», «ман сасă анкартипе каять, юрлама пĕлместĕп эпĕ», «çĕр çине анма вăхăт»...*

Е.Г.Алексеева калăпланă калавсенче чăвашлăх аталанăвĕн малашлăх çул-йĕрне, сăнарсенчи автор шухăшĕн «ыранхиллĕхне», уйрăмах паянхи ял çамрăкĕн пуласлăхне курас килет. Çакă вара малашнехи кĕнекесенче сăнарланасси пирки пĕртте иккĕленместпĕр.

Чăваш тĕнчин тĕп утравĕ çинчи тӳлек те лăпкă туйăнакан çанталăкăн сивĕ кĕр çилĕсемлĕ кунĕсем тĕрлĕрен иртсе пыраççĕ. Тăван литературăра телей çăлтăрĕн сапакине тытма тăрăшакан чăвашсен сайра хутра та пулин кăвак хуппи пек уçăлса каякан çурхи ыр илемлĕх те курăнать-ха. Акă, хамăр сăмахсене çирĕплетмешкĕн тепĕр автор патне куçăпăр.

Л.И.Филиппова ятне республикăри хаçат-журналçăсем те, ăсчахсем те юрă-кĕвĕ ăстисем те питĕ лайăх пĕлеççĕ.

Пултаруллă авторăн темиçе çул каяллах самай хулăн кĕнеки кун çути курчĕ. Чăвашлăха тĕпе хурса çырнă, чăвашлăх тĕнчине тĕрлĕ енчен çутатнă, ку таранччен лăпкăн выртакан ыйтусене хускатнă /калăпăр, «Çеçпĕле каялла тăван çĕре илсе килесси», «Кĕркунне тĕл пуличчен е Çамрăксен театрне кил кирлех», «Темле пулсан та – чăвашах мухтатăп».../ тепĕр самаях шухăша яракан хамăр пĕлекен тата халĕ те пĕлсех çитеймен /тĕнче аслă вĕт!/ пурнăçри сăнарсен пирĕн шухăш-туйăмсене сӳлеттерекен кинори пек тĕрлĕ ылмашуллă тĕл пулусен тĕрĕслĕхĕпе суялăхĕ, савăнăçĕпе хурлăхĕ, ăшшийĕпе сиввийĕ. «Ан ĕнен, ан хăра, ан ыйт...» тесе ят панă вăл ăна. Тĕпрен илсен виç пайран тăракан сумлă çак ĕçĕнче – публицистика статйисенче, калавĕсенче /вĕсем шăпах вуннă/ тата пьесинче /«Тĕл пулăпăр чунсен ытамĕнче»/ чи «малти вырăнта – ăс-хакăлпа кăмăлсипет чăнлăхĕ». Паллах, кĕнекепе тĕплĕн паллашнă хыççăн каламаллисем темĕн чухлех, анчах та çак кĕске хаклавра хăшпĕри пирки кăна чарăнса тăрăпăр.

Тӳрех каламалла: авторăн хăйĕн калавĕсене ят парасси – питĕ хăйне евĕрлĕ. Канаш районĕнчех кун çути курнă, пирĕнтен çамрăклах уйрăлса кайнă çыравçăн – литература тишкерӳçин В.А.Абрамовăн стильне çывăх пек туйăнать вăл. Çакă çисĕм пек çуйкăнлă та çунатлă Çеçпĕл çĕр-шывĕ çыравçă-талантпа пуян пулнине тепĕр хут çирĕплетет-тĕр.

Кашнин пирки хăйĕн чĕри витĕр туйса лăплантарать пире автор /109 стр./: «1997, чӳк: ...Ним çукран мар, паян ку тĕлĕшпе пулса пыракан ларутăрăва пула çырăнчĕç çак йĕркесем. Малашне те халăх шухăшкăмăлне шута илмесен мĕнле культура çинчен калаçма пултарăпăр эпир». Публицистика ыйтăвĕсемпе пĕрлех, пурнăçри çын суранне çутатнă калавсем те пур. Акă вĕсенчен пĕри – «Ылханлă хура çĕмĕрт». Тĕкĕнме юраман темăна ярса илни калав ятĕнченех лайăх курăнать. Хăрамалли, асаплanмалли, шухăшламалли – темĕн чухлех иккен «çири кĕперен те çывăх» çĕрте. Çынна, уйрăмах ачасене кӳнĕ хурлăха нимĕнле тарасапа та виçме çук. Пирĕн шухăшпа, калаври ылханлă çимĕçпе «аташаканăн» тата пирĕн пурнăçри вăрă-хурахăн тискерле ĕçĕ пĕр ретрех иккен тесе пăхмалла.

Л.И.Филипповăн ытти калавĕнче те, вĕсенчен ытларахăшне 2006 çулта çырнă, çамрăксен пурнăçĕнчи хăрушă инкексем сăнланнă: «Мĕншĕн татрăн Вера кун-çулне, Алеша?», «Мĕн туса хутăн, Ульяна?». Вĕсенче автор пирĕнпе тата пирĕн ачасемпе çапла пулмалла маррине тепĕр хут аса илтерет. Вĕсемпе паллашнă хыççăн вулаканăн ăстăнĕнче çакăн пек шухăш та пĕрре кăна мар çуралĕ: çемье е шкул айăпĕ-ши кунта? Кам ĕçлесе çитерейместь шкул çулне çитнĕ ачасемпе.

Студенткăн çемьери пăтăрмахĕ, ăнăçсăр тата путăк-сулнăкра пулса иртекен, ялан тенĕ пек пĕр пекрех пулăмпа вĕçленекен арăш-пирĕш юратăвĕ «Аннесем кăна ăнланĕç» калавра сăнланнă. Çапла йӳçĕ эрĕм хыптарать çăмăлттай пурнăç хăш чух.

«Кам ачи эс, Христина хĕр ача?» калава вуланă хыççăн та паянхи çамрăк хăйне тивĕç пĕтĕмлетӳ тăватех. Тутар каччипе чăваш хĕрĕн юратăвĕ, Ильдар тата Оля, вĕсен хĕрĕ – Христя-Христина... Паянхи ял çамрăкĕсен шанчăкĕ çирĕп пулмаллине тепĕр хут аса илтерет автор. «Вăрттăнлăх пирĕштийĕ» тата «Çуралнă кун» калавсене те вуласа тухмаллах хальхи çамрăкăн, вăл чăннипех ыранхи ытлăçитлĕ, ача-пăчан телейлĕ пурнăçĕ пирки шухăшлать пулсассăн.

Тĕпрен илсессĕн хальхи чăвашăн сиплĕ сывлăшĕ ăçта пулмаллине «Тĕл пулăпăр чунсен ытамĕнче» пьесăпа паллашнă хыççăн пĕлетпĕр. Аваллăхпа çыхăннă Чăваш Юпи те пур кунта. Сайра хутра курăнкалакан чăвашсен авалхи ячĕсемпе /Пинерпи, Ултияр – тĕп сăнарсем/ усă курни те кăсăклă. «Симĕс куçлă вутăшпийĕм» тесе чĕнет Пинерпине Ултияр. «Нимĕн те ешермест ĕмĕр-ĕмĕр» пулин те, «çут хĕвел çул кăтартать – хĕрхенет» пире.

Тишкерĕве пĕтĕмлетсе çапларах калăпăр. Кирек епле ĕçĕн те хушмалли, тен, юсамалли те пулатех. Пултарулăхăн сăннийĕ таçта та, таçталла та тĕллеме пултарать. Кашни вулакан хăйне май ăнланать ăна. Алла кĕнеке тытса, таса чунне йăпатма кирлисене шырать, тивĕçлĕ пĕтĕмлетӳсем тăвать. Пурнăç вара шав малаллах шăвать, çĕнĕ тĕллевсем кăларса тăратать. Уйрăмах – паян.

■ **Л.АТЛАЙ**

[1]Статья калăпăшĕ ӳснĕрен тата икĕ кĕнеке тишкерĕвне асăнман: **Таллеров Л.В.** Майра: Роман, повеç, калавсем. – Шупашкар: Чăв. кĕнеке изд-ви, 2006. – 319 с.; **Карягина М.Ф.** Хура тумлă арçын: Повеçсем, калавсем. – Шупашкар: Чăв. кĕнеке изд-ви, 2007. – 207 с.

• ➡ 12 стр.

КУЛЬТУРА

*Юбилей*

# Хавхалану хавалĕн вертикалĕ

***/Анатолий Васан çуралнăранпа 80 çул çитрĕ/***

Анатолий Васильевич Васан /04.05.1934-17.10.1996/ хăйĕн пĕрремĕш кĕнекине «Хавхалану хавалĕ» ят панă /Шупашкар, 1987/. Хавхалану хавалĕ – Васан пурнăçра тата пултарура хăйне епле тытнине /стратегия поведения/ тĕпрен палăртакан ăнлав, вăрттăн тупсăм. «Сăпайлăччĕ, пысăка хумастчĕ вăл хăйне. Çав вăхăтрах хăй хакне те пĕлетчĕ. Васкамасăр, шухăшне лайăх йĕркелештерсе калаçатчĕ. Кирек хăçан та хăйне çӳлти шайра тытнă», – М.Я.Сироткина халалланă «Пирĕн аслă вĕрентекенĕмĕр» /1984/ тĕрленчĕкре Васан хăй пирки каланă тейĕн. Михаил Яковлевичпа Анатолий Васильевич сăнĕ-сăпачĕпе те пĕр пекрех /пĕр психофизиологи тип/.

«Анатолий Васильевичăн шалти мăнаçлăхĕ пурччĕ, – аса илет В.П.Станьял. – Вĕлтĕртетсе çӳремен. Вăраххăн, хулăн сасăпа калаçатчĕ. Ун патне пĕчĕк ыйтупа пыран – вăл сана пысăк ĕç çинчен ăнлантарнă пек ăнлантарать. Вăл хăйне академик пек тытатчĕ».

«Анатолий Васильевич хăйне епле тытни унăн шалти ĕненĕвĕнчен тухать пулмалла, – тет Г.И.Федоров критик. – Васкамасăр утатчĕ. Ыйтăва тĕпĕ-йĕрĕпе çутатма, пур енлĕн шайлаштарса пăхма, виçме тăрăшатчĕ».

Анатолий Васильевич кĕлеткипе начаркка та хытканччĕ. П.П.Фокин 1970 çулсене аса илнинчен: «Çил вĕрсе ӳкересрен кирпĕч чиксе çӳрет», – тетчĕç ун пирки. Вăл ĕçе килнине ятарласа сăнаттăмăр. Чӳречерен пăхатпăр та: «Паян çил вăйлă – çитеймерĕ-ха», – теттĕмĕр».

Шăл йĕренсем Анатолий Васильевича пĕчĕклетсе пăхнă, анчах унăн чăн тупсăмĕ пирки тĕрĕс сĕмленнĕ. Анатолий Васильевич – Дон Кихот. «Анатолий Васильевич системăна курайман çын пулнă, – шухăшлать В.П.Иванов. –



Вăл хăйне питĕ тивĕçлĕ тытатчĕ, чыс тени уншăн малтаччĕ. Система ăна хуçасшăнччĕ – хуçаймарĕ. Парăнмарĕ вăл пур пĕрех».

«Хăйшĕн мар, ытларах çынсемшĕн тăрăшатчĕ сăпай ăсчах», – çырать Г.И.Алимасова «Илемлĕ сăмах тĕпчевçи» аса илӳре /Хыпар, 1999, çĕртме, 8/.

Хăйне упрассишĕн тăрăшасси вăл – тĕп инстинкт. Хăйĕн пирки манса ыттисемшĕн çуннин вăрттăнне шаларах /альтруизм генĕ пурри пирки калаççĕ/ е çӳлерех /çынна Çын, тӳпе ачи тăвакан/ шайра шырамалла. Анатолий Васильевич пултарăвĕ – критика ĕçĕсемпе литература тĕпчевĕсем кăна мар. Ун чăн пултарăвĕ – вăл хăйне пурнăçра тата ĕçре епле тытнинче. Çакна шута хурсан Васан пурнăçĕпе пултарăвĕнчи хавхалану хавалĕнче Хавал шевли вылянине курма пуçлатпăр. Эрих Нойманн «Искусство тата вăхăт» ĕçĕнче кун пирки ак мĕн çырать:

«Пултарăва хевте паракан хăват – çут çанталăк мар, социаллă хутлăхпа культура канонĕ те мар. Вăл – темскер. Ăруран ăрăва, халăхран халăха, ĕмĕртен ĕмĕре, этемрен этеме куçакан темскер. Пирте пурăнакан çак темскер /эпир ун пирки пĕлнипе пĕлменнине, йышăннипе йышăнманнине пăхмасăр/ гуманизм, çынлăх енне çавăрать. Ку таранччен эпир çынна горизонт талкăшĕнче курнă. Малашне вертикаль талкăшĕнче те курма пуçлăпăр. Этем тымарĕсем ку тĕнче чиккинчен тухса леш тĕнче чиккине тăсăлаççĕ. Çав тымарсем тăрăх кайса эпир этемлĕх историйĕн тĕрлĕ сийĕсем патне, историченхи тапхăрĕ патне çитетпĕр. Паянхи хавхалану хавалĕнче леш тĕнчерен килекен хавхалу хумĕ пурах». /Юнг К.Г., Нойманн Э. Психоанализ и искусство. Изд-ва: Рефл-бук, Ваклер, 1998. С. 86./

Анатолий Васильевич çулталăкне асăннă каçра килнĕ шухăшкăмăл /1997, чӳк/:

В.Г.Родионов: «Аслă юлташ, вĕрентсе пыракан пулнă. Тĕрĕсмарлăха таса чунĕпе чăтма пултарайманнипе ыттисенчен уйрăлса тăратчĕ. Куçран калатчĕ, ыттисем калама хăракан япалана хăй çине илетчĕ. Пурăнас çулĕ кĕскерех пулчĕ, çын хуйхине хăйĕн чĕрине кĕртсе, çын хуйхипе пурăнса хăйĕн ĕмĕрне кĕскетрĕ пулĕ».

Г.Я.Хлебников: «Çывăх çын, хăйĕн чунне паратчĕ çынсемшĕн. Питĕ канăçсăр чунлă темелле. Йывăрлăха лексен пулăшма тăрăшатчĕ. Хытанка ӳт-пӳллĕ пулсан та гладиатор чунлă. Чăнлăхшăн, тĕрĕслĕхшĕн тăрăшакан çын. Пĕтĕм чунне парса ĕçлетчĕ. Чунчĕре тасалăхĕпе уйрăлса тăратчĕ. Вăл чăн-чăн критик пулнă».

Ф.Е.Уяр: «Чи паллă енĕ – тĕрĕслĕхе, чăнлăха юратни. Суяна тӳсме пултараймастчĕ. Чăн-чăн этем. Пысăк, анлă, сарлака чунлă. Çынсене хисеплеме юратаканскер. Питĕ ăста, ĕçлеме юрататчĕ. Юратса ĕçлетчĕ. Чунне парса çыратчĕ. Усал çынсемпе хутшăнман».

■ **Юрий ЯКОВЛЕВ**

***Людмила САЧКОВА***

# Чакак йăвисемшĕн

***Калав***

Юхан шыв леш енчи хăвалăхра чакаксем йăва çавăрма пикенчĕç, кунĕн-çĕрĕн чакăлтатаççĕ, турат-хăва-çӳçе пуçтараççĕ. Ку çеç-и, вĕсем юхан шыв леш енчен ял ку енне вĕçсе каçрĕç те тĕрлĕ çĕртен алюмини пăралук таткисене пуçтарса хăйсен йăвисене çирĕплетме пуçларĕç. Çирĕп, селĕм лараççĕ халь вĕсен йăвисем çӳçе туратти-сем çинче. Вăйлă çил те вĕсене шыва ӳкереймĕ, хурчка-тавраш та пырса сăмсине чикеймĕ. Хăйсем вара пĕр вĕçĕм чакăлтатаççĕ.

Куçма чакаксен ĕçне айккинчен сăнаса тăчĕ. «Епле ăслă ку кайăксем, йăвана тимĕртен çавăрма пикенчĕç», – çапла шухăшласа Куçма йăвасене аркатма пуçларĕ. Тĕрĕсрех каласан, вĕсен йăвинчи алюмини пăралуксене туртса кăларчĕ те икĕ ывăç пуçтарса килне таврăнчĕ, пахча решеткисен тăррисене яваласа тухрĕ. Кирлех те марччĕха Куçмана ку ĕç. Кӳршĕ ачисем çырла вăрлама ан кĕччĕр тесе çеç аппаланчĕ. Нумаях шухăшласа тăмарĕ, решеткесене пĕр шит çӳлелле хăпартса явакласа тухрĕ. Хăй шухăшĕпе «хуралтине çирĕплетрĕм» терĕ ĕнтĕ.

Карта тăррине чакаксем çар пек ларса тухнă. Чакак пасарĕ тейĕн, чакăлтатаççĕ çеç, такама вăрçаççĕ ĕнтĕ, такама ятлаççĕ. Тем пухăвĕ ирттереççĕ. Пĕр кана «чакак пухăвĕ» тăруках шăпланчĕ, çакскерсем Куçма пахчинчи пралук картана сӳтме пуçларĕç. Явса çыхнăскерсене сăмсисемпе тем тĕрлĕ явакласа сӳтрĕç те ним юлмиччен йăтса кайрĕç. Чакаксем юхан шыв леш енчи йăвисене тепĕр хут çирĕплетрĕç. Чăн-чăн строитель пекех тăрăшрĕç.

Куçма тарăхса кайрĕ. Чакаксен мăшкăлĕ пулас килмерĕ. Вăл юхан шыв леш енне каçса татах чакаксен йăвисене тустарасшăнччĕ, хăш-пĕр йăвари пралука сӳтсе илме ĕлкĕрчĕ те ĕнтĕ...

Чакаксем сасартăк йăвисенчен харăссăн çĕкленчĕç те халĕччен илтмен шăв-шав çĕклерĕç, пуç çийĕн хура пĕлĕт пек явăна пуçларĕç, Куçмана пуçĕнчен çунаттисемпе çапса хăварма хăтланчĕç. Урисемпе чавма, сăмсисемпе сăхма хăтланакансем те пулчĕç. Куçма ниçта кайса кĕме пĕлмерĕ, аллисемпе çапкаланчĕ, хăлаçланчĕ... Юлашкинчен чăтаймарĕ, чакаксем вырнаçнă хăвалăхран чупсах тухса тарчĕ! Чакаксем ун хыççăн темччен вĕçрĕç...

# Вилĕмсĕр Çеçпĕл

*Сăвви те, кĕвви те А.КИБЕЧĔН*



Тахçан авалтан кĕтнĕ Çеçпĕл,
Эс çитрĕн пире ыр сунса.
Камсем сăвăça вилнĕ теççĕ,
Калаççĕ çакна йăнăшса.
Эс килтĕн те шанчăк çуратрăн,
Çутатрăн пуласлăх çулне.
Хĕрӳ сăмахпа эс вăратрăн
Чăвашăн салхуллă чунне.

*Хушса юрламалли:*
**Пĕр харăссăн, Улăп пек утăр,**
**Хастарлă чăваш ачисем.**
**Ялан харсăр Çеçпĕл пек пулăр,**
**Ан юлăр кун-çул уттинчен.**

Паман сана канăç пĕр танлăх,
Вăл пулнă чи шаннă йыхрав.
Эс пирĕншĕн ĕмĕрлĕх чăнлăх,
Сассу та янравлă шăнкрав.
Вилмен эсĕ, Çеçпĕл, пурнатăн,
Чĕрӳ сан тапма чарăнман.
Хĕвел пек çиçсе эс тăратăн,
Ялавăн курнатăн ялан.
*Хушса юрламалли:*

***Николай ТЕВЕТКЕЛ***

# Онегин виçипе çырнă шӳтсем

Мĕнле çын пулнă-ши Онегин?
Çак самана çул-йĕрĕпе
утма тăрсан темскер те лекĕ –
çакна калатăп тӳррипе.
Мăн кăмăллăх пуçне çухатĕ,
тыттарĕ тепĕр чух суха та
хресчен çак япшартан кулса:
«Ĕçле, мăн кăмăллă услап!»
Ăна вăл апатра тыттарĕ
пĕр çăкăр чĕллипе сухан,
ял-йышпала суха тусан
«Ку – хамăр çын!» тесе сас парĕ.
Шăв-шавлă эртелпе пĕрле
эрех ĕçтерĕ: «Ан ĕрлеш!»

Анчах Онегинсен еткерĕ
кирек хăçан та сумсăр çав.
«Кама вăл кирлĕ?» – текелерĕç
хăшсем мана вăрçа-вăрçа.
Кирек мĕнле тавлашура та
эп шухăш кĕлĕпе шуратăп
чунри кăвайтăм çуннăран –
çӳреймĕп шухăшсăр, мăран:
«Ку чăнсăр-çке!» – тесе
калаймĕç
мана ĕненнĕ ăсчахсем,
эп шыраман суя чапсем,
хывăхпала – çук! – улталаймĕç
тĕпексĕр юлнă автана –
мана та çамрăк чăх манать.

Чăвашăн Байрон пек улпучĕ
чăнах пулни çинчен çырма
хака ларать çырулăх хучĕ –
ăс-хакăл та пуçлать ырма.
Поэт çырман сăмах тĕшшисĕр
е тарават çĕр-шыв ăшшисĕр –
çак чăнлăх хăшĕшĕн, хайхи,
халь ик айкки те тăвайкки.
Пĕрех вăл маншăн хулăн саслă!
Анчах хысна укçипеле
эп çăпала тытман мăнаçлăн:
пулман тула тухман улпут –
сăлтавсăр мар хĕрелчĕ хут.

***Микул ПУЛАР***

# Истори ишĕлчĕкĕсем

Спартака çĕнтернĕ хыççăн Красс,
Тенĕ сенатра: «Камран хăрас?»
* * *
Шывшăн антăхать-çке ав Тантал,
Кам ăна курка тыттарĕ халь?
* * *
Тройăна «лаша» пĕтернĕ-мĕн
иккен...
Чăннипе Еленăра мĕн пур
инкек.
* * *
– Пур пĕрех çĕнтертĕмĕр
эпир! –
Тенĕ-мĕн çарне пĕтернĕн Пирр...
* * *
Питĕ сĕмсĕр пулнă тет Нерон,
Пĕтĕм влаç пулса-çке йăлт
пĕр ун.
* * *
Çăлтăрсем ӳкеççĕ
Çӳллĕ тӳпере.
Мĕлтлетсе илеççĕ,
Ир енне сӳнеççĕ
Куç хĕссе пире.

Вăранать тавралăх,
Ӳкрĕ кăвак çут.
Ĕнтрĕк-ха çанталăк,
Пуçланать çеç талăк.
Пурнăçпа тан ут.

Хĕрелет, кур, тухăç,
Йăлкăшать хĕвел.
Сан пуçра пин шухăш,
Чун-чĕре те шухă,
Ут тăрать чĕвен!

Надежда СМИРНОВА хатĕрленĕ. • Çырăр: Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13, «Хыпар». • Шăнкăравлăр: Тел. /8352/ 56-08-61.

# МĔН ÇЫРАÇÇĔ ХАÇАТСЕМ

# Ку чухнехи Робинзон

*Акă хăçантанпа ĕнтĕ тĕнче 37 çулти Хосе Альваренга пулăç тĕлĕнмелле майпа çăлăннине сӳтсе явать. Ĕненме те çук темелле: пĕчĕк кимĕпе вăл çулталăк ытла уçă океанта пулнă! Нумайăшĕн кăмăллах мар ыйтусем çуралнă.*



### Çул çӳреве эрех ĕçсе тухнă

...Тĕлĕнмелле çул çӳреве Хосе пĕрмаях эрех ĕçнĕ хыççăн тухнă. Ӳсĕр пуçпа вăл темĕн те тунă.

«Симĕс çĕленпе» туслашнипех 13 çул каялла Хосен тăван Сальвадортан тухса кайма тивнĕ. «Пĕрмаях эрех ĕçетчĕ, юлташĕсемпе сулланса çӳретчĕ», – аса илеççĕ кӳршисем. Çапла пĕрре ĕçсе ӳсĕрĕлсен Хосе вырăнти шăпанасемпе çапăçса кайнă. Çамрăка темиçе хутчен çĕçĕпе чикнĕ, тăван амăшĕ те вилет ĕнтĕ тесе шухăшланă. Çапах та больницăра икĕ эрне выртсанах Хосе килне таврăннă.

Йывăр аманнă, ӳсĕр пулин те Хосе хурахсене хирĕç тăма пултарнă. Мĕншĕн тесен çамрăк чухне çар хатĕрленĕвĕнче пулнă. 90-мĕш çулсенче Сальвадортa граждан вăрçи лăпланман. Арçынсем сĕм-сĕм вăрмансене партизан вăрçин вăрттăнлăхĕсене вĕренме тухса кайнă. 3 çул Хосе çапăçма, çав тери йывăр условисенче апатсăр, шывсăр пурăнма хăнăхнă. Çавăн чухне ăна тимĕр шапа тытма, унăн юнне шыв вырăнне ĕçме вĕрентнĕ.

### Хăйне Сысна тесе чĕннĕ

Çĕçĕпе чиксе амантнипе больницăран тухсанах Хосе уншăн тусĕ тавăрнине пĕлнĕ – леш хурахсенчен пĕрне тĕп тунă. Çамрăк арçын хăй патне килеççех ĕнтĕ текен шухăшпа пурăннă. Арăмне тата çулталăкри хĕр пĕрчине пăрахса чикĕ леш енне тарнă. Мексикăри Коста-Азуль ялĕнче тĕпленнĕ.

«Тинĕсре 13 уйăх ирттерни пирĕн пĕчĕк ялта 13 çул пурăннипе танлаштарсан темех мар!» – кулкаларĕ журналистсемпе калаçнă чухне унта пурăнакансенчен пĕри. Хосе каярах çеç пулăçра ĕçлеме пуçланă. Малтанхи вăхăтра йытă апачĕ вăрлама, кăштах укçашăн çӳп-çап пуçтарма, клоун пулса ĕçлеме тивнĕ. Çапах та эрни-эрнипе выçă çӳресен те вăл хаваслă та... мăнтăркка курăннă. Çавна май хăй валли хушма ят та шухăшласа тупнă – Сысна.

### Питĕ Лăпкă океан

2012 çулхи чӳк уйăхĕн 17-мĕшĕнче çил-тăвăл тухасса нимĕн те систермен-ши е эрехпе минренĕ Альваренгăна çапла туйăннă çеç-ши? Шаннă вăл: пулă паян нумай кĕрĕ! Анчах та пĕччен ĕçлеме кичем, Хосе пĕлĕшне Иезекииль Кордобăна хăйĕнпе пĕрле пыма чĕннĕ. Пулă тытмалли хатĕр-хĕтĕре шыва ывăтма та ĕлкĕреймен – çил-тăвăл тухнă. Кимме уçă тинĕсе илсе кайнă. Альваренга ĕçтешĕсем каласа панă тăрăх – çав ирхине пулă тытма темиçе кимĕ тухнă, пĕри те каялла таврăнман...

Çил-тăвăл хăвăртах лăпланнă. Анчах моторлă кимĕ двигателĕ ваннă. Компас та, кĕсменсем те, апат та пулман. Шыв, пулă тытмалли хатĕрсем, 8 метр тăршшĕ кимĕ тата пулă хумалли пысăк ешчĕк çеç. Шыв юхăмĕ вĕсене анăçалла, уçă океана илсе кайнă...

Малалла мĕн пулнă – Альваренга хăй çеç пĕлет. Те вăл тем каласа çитерейместь, те чăнахах та нимĕн те ас тумасть. Тĕнчери хаçатсенче унăн пурнăçĕ çинчен темле хыпар та пичетленнĕ. Чĕрĕ пулă, чарлан ашĕ çисе пурăнма тивнĕ.

Уçă тинĕсре кайăка тытмалли 2 мел пур. Пĕрремĕшĕ – пулла çекĕл çине тирмелле те чарлан çывăхра вĕçсе иртнĕ май ун еннелле ывăтмалла. Кайăк апата ярса илет те «вăлтана» çакланать. Пулăçсем тата çакнашкал вăрттăнлăхпа та усă кураççĕ: вилнĕ пек пулса выртаççĕ, кимĕ çине ларакан кайăксене тытаççĕ. Çак вăхăтра Хосе çумăр шывне, хăй тытнă тимĕр шапасен юнне ĕçсе пурăннă.

4 уйăхран Иезекииль вилнĕ, Хосе /хăй каланă тăрăх/ унăн ӳтне шыва пăрахнă. Чăн та, мăнтăркка пулăçа пăхса хăшĕсем çакна ĕненмеççĕ. Альваренгăпа Кордоба пĕлĕшĕсен хушшинче хăрушă саскура çӳрет. Хосе хăй нимех те каласа кăтартмасть. 469 кун уншăн пĕр куна пĕрлешнĕ. Вăл тинĕсре «ярăннă» вăхăтра çилтăвăл текех тухман. Çакна специалистсем те çирĕплетеççĕ: карттă тăрăх çула палăртас тăк океанăн çак лаптăкĕнче тайфунсем те, торнадо та тухман. 500 çул каялла Фернан Магеллан та çак вырăнсенче çул çӳренĕ. 4 уйăх питĕ лăпкă çанталăкра ишнĕ. Çавăнпа ăна Лăпкă океан тесе калама пуçланă.

■ **Евгений ПРОСКУРЯКОВ.**

/«Комсомольская правда»/

*Тĕнче тĕлĕнтермĕшĕсем*

# 1980 çулхи Олимпиада

*Мускаври Олимпиада социализм тапхăрĕнчи чи пысăк уявсенчен пĕри пулнă. Унран аслăраххисем 1945 çулхи çу уйăхĕ тата Гагарин вĕçевĕ çеç.*

### Хĕрлĕ çар, вырăс баронĕ

1980 çул тĕлне коммунизм тума палăртнă. Ăна 20 çул маларах халăха Никита Хрущев шантарнă. Пурте яланхи пек мар пулăма кĕтнĕ.

Олимп вăййисене ирттермелли ирĕкшĕн Мускав 60-мĕш çулсенченех кĕрешнĕ, анчах ăна каяраха куçарса пынă. Çак вăйăсене кунта иртгерме йышăнас тĕлĕшпе Раççейрен тухса кайнă, Лихтенштейнра тĕпленнĕ Эдуард фон Фальц-Фейн барон нумай тăрăшнă. Вăл пĕчĕк çак патшалăхăн Олимп комитечĕн председателĕ пулнă. Барон тĕрлĕ патшалăх пуçлăхĕпе, пысăк бизнесменсемпе, спортри чиновниксемпе çыхăну тытнă, сасăлас умĕн Пĕтĕм тĕнчери Олимп комитечĕн кашни членĕпе ĕçленĕ – çапла майпа СССР Союзĕ çĕнтернĕ.

Мĕншĕн тăрăшнă-ха? Пĕрремĕшĕнчен, Тăван çĕр-шыва ăнăçу çеç суннă, иккĕмĕшĕнчен, унăн Раççейре пулас, хăйсен имениййĕн вырăнне пăхас, вырăс сывлăшĕпе «сывлас» килнĕ.

### Леонид Ильич хирĕç!

Совет Союзĕшĕн Олимпиада иртгерме ирĕк илни политика тĕлĕшĕнчен çĕнтерни шутланнă. Паллах, халăха кӳрекен парне те, наци сывлăхне çирĕплетни те. Анчах та çав вăхăтра пысăк мероприятисем хăйсен тăкакне туллин саплаштарайман. Ун чухне капитализм çĕр-шывĕсенче рекламăпа ĕçлесе илекенсем тăкакланнă, Союзра Олимпиада валли патшалăхăн укçа уйăрма тивнĕ.

Бюджетшăн йывăрлăхсем тухса тăма пултарнă. Хăрушсăрлăха тивĕçтерме те çăмăл мар. СССР Союзĕн тĕнчипех тăшмансем, унăн политики тĕрлĕ радикала килĕшмест. Ниçта та нимĕн те сирпĕтмесен те, никама вĕлермесен те харпăр хăйĕн диссиденчĕсем провокаци йĕркелĕç. Тĕслĕхрен, стадионта юрăхсăр сăмахсем кăшкăрĕç.

Çакă, паллах, хытах шухăшлаттарнă, çавна пула 1975 çултах Брежнев Тĕп Комитет Политбюровне çырупа тухнă: «...Ку мероприяти валли питĕ нумай укçа кирлĕ... Тĕрлĕ хирĕçӳ сиксе тухма, Совет Союзне варалама пултараççĕ. Çак ыйтăва пирĕн çĕнĕрен пăхса тухма, Олимпиада иртгерессинчен пăрăнма тивет пулĕ...»

Телее, Политбюрон ытти членĕ асăрханулла генсека ӳкĕте кĕртме пултарнă, Олимпиада иртгерессишĕн хăйĕн сăмахне каланă.



### Пулать сире Олимпиада

Çав вăхăтра сивĕ вăрçă пынă. Пирĕн çĕр-шыв çине бомбăсем пăрахман, анчах та дипломати енĕпе тата экономикăра Анăç пире самаях сăтăр тунă. Олимпиада пирки те çавнах каламалла.

Вăйăсене совет çарĕсене Афганистана кĕртнипе йышăнман теççĕ. Пĕр енчен, ку çапла темелле, çапах та мероприятие путлантармалли сăлтавсене пире курайман политиксем 1975 çултах шырама пуçланă. Афган меллĕ сăлтав çеç пулнă.

Çĕнĕ 1980 çула кĕтсе илсен темиçе кунранах Америка президенчĕ Картер наци телекуравпа чĕнсе каланă, СССР çарсене кăлармасан АПШ Олимпиадăна хутшăнмасси çинчен пĕлтернĕ. Америкăн Олимп комитечĕ тӳрех бойкот тăвас пирки каланă, Америкăпа пĕр шухăшлă çĕршывсен Олимп комитечĕсем те вĕсен хыççăн кайнă.

Çапла вара Олимп вăййисене 65 патшалăх хутшăнман, çав шутра – АПШ, Канада, Турци, Кăнтăр Корея, Япони тата ФРГ.

Апла пулин те Олимпиадăна йышăнманни çинчен пĕлтернĕ патшалăхсен спортсменĕсем Мускавра Пĕтĕм тĕнчери Олимп комитечĕн ялавĕсен айĕнче ăмăртнă.

### Лăпкăлăх çеç

Криминал тĕлĕшĕнчен илсен Олимпиада умĕн Мускава тĕплĕн стерилизациленĕ. 1979 çулхи кĕркуннерен пуçласа пысăк темиçе бандăна тĕп тунă. Хăрушăрах преступниксене колонисене ăсатнă. Психика тĕлĕшĕнчен чирлĕ, обществăна сиен кӳме пултаракан çынсене больницăсене янă. Тĕп хулара пурăннă криминал авторитечĕсене пурне те ШĔМе илсе пынă.

Мускаври метрора пĕлтерӳсене акăлчанла панă. Хулара нумай вырăнта асфальт çĕнĕрен сарнă, ăна çусах тăнă. Хула илемленнĕ, хăтлăланнă.

Паллах, милиционерсен йышне çирĕплетнĕ. Тĕп хулана çĕр-шывран шалти çарсен салтакĕсене тата милици курсанчĕсене илсе пынă.

### Совет Союзĕнчи менеджмент

Спорт уявĕ иртгерме Совет Союзĕ 2 млрд ытла тенкĕ тăкакланă, лотерея иртгерсе, билетсем сутса тата ытти енĕпе 1 млрд та 100 млн тенкĕ каялла «таврăннă». Пĕрре пăхма тăкак темелле. Çапах та ку ахаль бизнеса кура шутласан. Обществăна усă кӳнине пăхсан пачах урăхла.

Усă курнă укçан пысăк пайĕ стадионсем, çулсем, аэропортсем, хăна çурчĕсем, пурăнмалли çуртсем тума кайнă. Тĕслĕхрен, Олимп ялне малтанах хулан лăпкă кĕтесĕ тăвăпăр тесе палăртнă. Унта шкулсем, поликлиникăсем, нумай хутлă çуртсем ӳссе ларнă. Спортсменсем кайнă, граждансем çак районта çĕнĕ хваттерсем илнĕ. Кунта тăкак çинчен калаçмалли те çук.

### Пирĕн çепĕç Упа çури

Вăйăсене хупнă чухне вĕçтерсе яма палăртнă Упа çурине резина промышленноçĕн аслăлăх тĕпчев институчĕн цехĕнче тунă. Упа çӳллĕшĕ – 28 метр, виçи /вĕрсе хăпартманни/ – 100 килограмм. Кун пек Упа 2 хатĕрленĕ. Малтанах вăл лайăххах вĕçмен. Ăна йывăрлатнă, çапах та веçех йĕркеллĕ иртесси иккĕлентернĕ.

Вĕçев пирки сăмах-юмаха вăрттăнлăхра тытнă. Ăна финалти юрра юрланă Лев Лещенкăна та усса паман. Текст авторне Николай Добронравова каламах тивнĕ. Унсăрăн Упапа уйрăлнине мĕнлерех çырса кăтартатчĕ-ха? Информацие вăрттăнлăхра тытни тӳрре тухнă. Упа çӳлелле çĕкленсен пурте макăрнă.

■ **Павел БУРИН.**

/«Моя семья»/

Сыхлав

# Чылайăшĕ айăпа йышăнмасть

*Ака уйăхĕн 20–29-мĕшĕсенче республикăра çурхи сунар тапхăрĕ иртрĕ: акарçăсем кайăк кăвакалпа ăсан аçине, кăрăпчака, хур кайăка тытрĕç. Чĕр чун тĕнчине хӳтĕлекенсем картран тухнисемпе мĕнле кĕрешеççĕ-ха? ЧР сунарçăсемпе пулăçсен патшалăх службин ертӳçин çумĕ Анатолий ПАВЛОВ хуравлать.*



– Кăçалхи тăватă уйăхра сунар йĕркине пăснă пирки административлă 111 ĕç пуçартăмăр. Ака уйăхĕнче саккуна пăснă 72 тĕслĕхе, сунар вунă кунлăхĕнче çеç 58 шута илтĕмĕр, – терĕ Анатолий Алексеевич. – Служба ертӳçи 64-шне пăхса тухса айăплисене 159,5 пин тенкĕлĕх штрафлама йышăннă. Следстви органĕсене уголовлă икĕ ĕç пуçарма материал ярса патăмăр. Служба çурхи сунар тапхăрĕнче кайăк кăвакалпа ăсан аçине, кăрăпчака, хур кайăка кашни акарçă çӳреме пултаракан лаптăксенче тытма 2431 çынна ирĕк пачĕ. Сунар йĕркелеме ирĕк паракан документра чи нумай миçе тытмаллине палăртнă. Вĕсем хальхи вăхăтра кайăкçăсем сунар правипе еплерех усă курнине пĕлтереççĕ. Çывăх вăхăтра миçешне тытнине усăмлатăпăр.

**– Сунар йĕркин хăш пункчĕсене пăхăнмаççĕ?**

– Çын кайăкçă пулнине çирĕплетме служба сунар билечĕ парать. Пĕрремĕшсем енлĕк тытма шыв-шур таврашне çул тытиччен ăна, темшĕн, кĕсьене чикме манаççĕ. Иккĕмĕшсем мĕн пур ухатник валли службăран уйăрнă сунар лаптăкĕнче е чĕр чун ĕрчетекен арендаторăн сунар вырăнĕнче кайăк тытмашкăн ирĕк паракан документ илмесĕрех пăшалпа, йытăпа çӳрерĕç. Кăçал служба патшалăх хыснине уншăн 400-шер тенкĕ çеç хывтарчĕ. Çут çанталăк пуянлăхĕпе пĕри те тепри тӳлевсĕрех пайта курма хăтланчĕ. Виççĕмĕшсем пăшалне полици пайĕнче шута илтерменни палăрчĕ. Çак тĕслĕхсемшĕн административлă 30 ытла ĕç пуçартăмăр.

**– Ака уйăхĕн 20-мĕшĕнче сунар йĕркине улшăну кĕртрĕç. Вăл камсене пырса тиврĕ?**

– Унта çĕнĕлĕх чылай. Уйрăммăн илсен – вĕçсе пыракан, шывра ишекен кайăк кăвакал аçине /амине вĕлерме юрамасть/ шыв-шур хĕрринче çӳренĕ чух е кимĕрен пеме юраманнине палăртас килет. Ăна хăмăшлăхран, ӳпле-шалашран, пытанса лармалли ытти хатĕртен çеç пемелле. Аçана илĕртме шыва ама кайăк кăвакал ямалла. Сунарçăсем ăна килте çитĕнтереççĕ. Сунарта чух вĕçсе ан кайтăр тесе хăрах уринчен кантрапа кăкараççĕ. Вăл сас парса ушкăнри аçасене илĕртет. Лешсем ун патне çывхарсан çеç кайăкçă пăшалтан перет. Кайăк хурсене Атăлпа Сăр çиййĕн вĕçнĕ е шывра чух пеме юрамасть. Улăх-çаранра апатланнă чух ӳпле-хӳшĕрен, пытанмалли ытти хатĕртен тĕллемелле.

**– Пăшалпа мĕнле усă курмалла?**

– Çул çинче, шурлăхра çав хатĕре кĕриччен ăна йĕнĕрен кăлармалла мар. Кăларсан çĕнĕ йĕркене пăсатăр. Çакăншăн кăна 20 яхăн ĕç пуçартăмăр. Кăçалхи ака уйăхĕн 20-мĕшĕччен штраф панă. Унтанпа судья пĕр е икĕ çуллăха сунар прависĕр хăварать. Пĕр çын тĕлĕшпе йышăну кăларнă ĕнтĕ. Çулталăкра йĕркене икĕ хутчен пăсакансем те пур. Тӳре вĕсене 4-шар пин тенкĕлĕх штрафлать.

**– Кайăк кăвакалсемпе хурсем республика урлă ака уйăхĕн тăршшĕпех иртрĕç. Акан 1–19-мĕшĕсенче е сунар тапхăрĕ вĕçленсен пăшалпа, йытăпа çӳренине çирĕплетрĕр-и?**

– Инспекторсем сунар вăхăтне шута хуман браконьер тĕлĕшпе административлă 14 ĕç пуçарчĕç. Эпир курмасăр-пĕлмесĕр юлнă, саккунпа килĕшсе тăман тĕслĕх нумаййине йышăнатпăр. «Çакна мĕнле ăнлантаратăр?» – ыйтаççĕ пирĕнтен. Служба районсенче 22 инспектор: кашни районта пĕрре çеç. Служба аппаратĕнче – инспектор правиллĕ 8 специалист. Районсене тухса кайма вăхăт пур чух темиçешĕ тĕрĕслеве хутшăнать. Инспекторсен лаптăка куллен пăхса çаврăнма бензин çитмест. Ăна çителĕклĕ туянмашкăн федераци хыснинчен укçа ытларах уйăрма ыйтатпăр. Инспектор сунар вырăнĕн пĕр кĕтесне кайнине пĕлсе тăракан браконьер теприпче чĕр чуна персе вĕлерет. Автотранспорт, бензин, штатра çын çителĕксĕртен чĕрĕлĕхе хӳтĕлесе ĕлкĕрейместпĕр.

**– Сунар вăхăтне шута хуманнисене мĕнле айăплатăр?**

– Судья сунар правине пĕр е икĕ çуллăха туртса илет. Айăплисем ăна çухатасшăн мар. Тӳрре тухассишĕн чĕрре кĕреççĕ. Суд ларăвне е хăйсем хутшăнаççĕ, е унта ваккат тытса яраççĕ. Инспекторсем браконьер айăпне ĕнентерме çирĕплетӳ кирлĕ пулассине малтанах пĕлсе тытса чарнă чух ăна, унăн сунар хатĕрĕсене, вăл ăçта, мĕнле сунар irттернине тĕплĕн видео е фото аппаратпа ӳкереççĕ. Саккуна пăснине çирĕплетекен материала суда тăратаççĕ. Сунар тапхăрне пăхăнманни ытларах – Хĕрлĕ Чутай, Çĕмĕрле, Пăрачкав, Вăрнар, Йĕпреç, Шăмăршă, Шупашкар районĕсенче. Улатăр тăрăхĕнче ака уйăхĕн пĕрремĕш çурринче браконьерсем икĕ кăвакала вĕлерчĕç. Вĕсен йĕрĕпе пынă инспектор пăшалĕсене туртса илнĕ, полици уйрăмне леçнĕ.

**– Республикăра карăк сахалланнă пирки 2016 çулччен ăна сунар объектĕнчен кăларма йышăннă. Анчах хăш-пĕр кайăкçă ăна çав-çавах тытать.**

– Çапла. Атăл леш енчи Сосновка поселокĕнче пурăнакан ашшĕпе ывăлĕ çуркунне пуçламăшĕнче, ирхи 2 сехетре, хырлăха карăк тытма кайнă. Çăмăл автомашинăра çĕр каçнă Геннадий Исаковпа Константин Горшков инспекторсем вĕсене кĕтсех тăнă. Браконьерсем кайăка пăшалтан персе вĕлерейменни. Ăна полици пайĕнче шута илтерменни тепĕр кунах палăрчĕ. Судья пăшала яланлăхах туртса илме, ашшĕне пысăк штраф тӳлеттерме йышăнасси куç кĕрет. Пуш-ака уйăхĕсенче карăк туйĕ пынă вăхăтра республикăри тĕрлĕ вырăнта тĕк юлнинчен, юр çинчи юнран браконьерсем карăксене вĕлернине пĕлтĕмĕр.

**– Йĕркене пăснисенчен тата камсене асăнатăр?**

– Атăл леш енчи Октябрь поселокĕнчен инçе мар чăтлăхра тĕттĕмре тĕл перекен пăшалтан кĕрĕслеттернĕ полици майорне. Унăн çумра сунарта çӳреме ирĕк паракан документ пулман. Ака уйăхĕн 3-мĕшĕнче çĕрле республикăн çут çанталăкăн уйрăмах сыхлакан «Кăмаша» лаптăкне, Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Иккĕмĕш Липовка ялĕн вăрманне, хир сысни тытма кĕнĕ браконьерсене. Иккĕшĕ полици пайĕнче шута илтермен, тĕттĕмре тĕл перекен пăшалсемпе пулнă. Вĕсем аш тушкипе тухасса виççĕмĕшĕ çăмăл автомашинăра кĕтнĕ. Пирĕн специалист документсене кăтартма ыйтнă. Анчах иккĕшĕ те пăрахса тарнă. Инспекторпа сунар лаптăкне тара илнĕ «Резон» общество егерĕсем 1,5 çухрăмран икĕ пăшал çакнă браконьера хăваласа тытнă, полици пайне илсе çитернĕ. Тепри ирхине унта хăех пынă. Вĕсене административлă кодексăн темиçе статйипе явап тыттарăпăр.

**– Сăнав вăрманлăхĕнче «капкăна» çаклатнă браконьера явап тыттартăр-и?**

– Ăна тытса чарма служба аппарачĕн инспекторĕсем те хутшăнчĕç. Вăл сунар тапхăрĕ вĕçленнĕренпе уйăх ытла иртсен хир сысни тытма хăтланчĕ. Пăшалĕнчен персе ĕлкĕреймерĕ: çулне пӳлтĕмĕр. Судья сунар правине çулталăклăха туртса илчĕ.

**– Саккуна пăхăнман сунарçă хăйне мĕн кĕтнине лайăх пĕлет. Ăна е пысăк штраф тӳлеттереççĕ, е пĕр-икĕ çуллăха сунар прависĕр хăвараççĕ. Явап тытас мар тесе инспекторсене хирĕç тăмаççĕ-и?**

– Хальлĕхе вĕсем çине алă хуман. Çапах та хăш-пĕр чух çапăçса каясси патнех çитеççĕ. Чылайăшĕ хăйне айăплă туймасть. Пĕрисем инспектор тытса чарнă вырăнтан тараççĕ. Хыçалтан хăвалама тивет. Айăпа хăйсем çинчен сирме хăтланаççĕ. Сунарта ушкăнпа çӳреççĕ. Инспектора хĕç-пăшаллă çынсемпе калаçса протокол çырма çăмăл мар.

**– Хальхи вăхăтра сунар объекчĕ шутланакан пĕр чĕр чуна та пулин тытаççĕ-и?**

– Çурла уйăхĕнче сăвăра, шурлăх кайăкĕсене тытма ирĕк паратпăр. Унччен кашни кайăкçă çӳреме пултаракан лаптăка, тара илнĕ акар лаптăкне сунара кайма, унта йытăпа çӳреме, пăшалтан пеме юрамасть. Çак йĕркене пăснине службăна /тел.: 45-10-65/ тата районти инспектора, полици пайне пĕлтерме тăрăшăр.

■ **Юрий МИХАЙЛОВ** калаçнă

Факс: /8352/ 28-83-70.
E-mail:hypar2008@rambler.ru
реклама пĕлтерӳ
Тел.: 28-83-70.
316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ.

Администрация Канашского района проводит аукцион по продаже права на заключение договора аренды земельного участка сроком на 5 лет площадью 63286 кв.метров с кадастровым номером 21:11:030603:100, расположенного по адресу: Чувашская Республика, Канашский район, с/пос. Сеспельское, земельный участок расположен в западной части кадастрового квартала 21:11:030603. Категория земель - земли сельскохозяйственного назначения. Разрешенное использование - для сельскохозяйственного производства. Начальный размер годовой арендной платы земельного участка 5760 рублей, задаток 1152 руб., шаг аукциона 288 руб. К участию на торгах допускаются физические и юридические лица. Торги состоятся 01 июля 2014 года в 10.00 часов в здании администрации Канашского района по адресу: г. Канаш, ул. 30 лет Победы, д. 87, кабинет № 30. Последний срок приема заявок для участия на торгах 25 июня 2014 года до 17.00 часов. Телефон для справок: 2-84-80.

Канашская районная администрация информирует население о предстоящем предоставлении земельного участка сельскохозяйственного назначения с кадастровым номером 21:11:000000:3466 площадью 10000 кв. м., расположенного по адресу: Чувашская Республика, Канашский район, с/пос. Вутабосинское. Разрешенное использование – для сельскохозяйственного производства. Срок аренды – 20 лет.
Желающим приобрести вышеуказанный земельный участок обращаться с заявлением в администрацию Канашского района по адресу: г. Канаш, ул. 30 лет Победы, 87, в течение 30 дней со дня опубликования, тел. 8 /83533/2-84-80.

Администрация Кошноруйского сельского поселения Канашского района проводит открытые торги (аукцион) по продаже права на заключение договора аренды земельных участков для ведения сельскохозяйственного производства, сроком на 20 лет:

| № лота | Наименование | Кадастровый номер | Местонахождение земельного участка | Площадь, кв. м. | Начальный размер годовой арендной платы з/у, руб. | Сумма задатка, руб. | Шаг аукциона, руб. |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| 1. | Зем. участок, лот № 1 | 21:11:000000:3010 | Чувашская Республика, Канашский район, с/пос. Кошноруйское | 4338400,0 | 104000,00 | 20800,00 | 5200,00 |
| 2 | Зем. участок, лот № 2 | 21:11:050302:81 | Чувашская Республика, Канашский район, участок находится в 1680 м по направлению на северо-запад от д. 1 по ул. Советская в д. Кошноруй | 606309,0 | 15800,00 | 3160,00 | 790,00 |
| 3. | Зем. участок, лот № 4 | 21:11:0:465 | Чувашская Республика, Канашский район, участок находится в 100 м по направлению на запад от д. 1 по ул. 50 лет Октября в д. Ближние Сормы | 409964,0 | 10650,00 | 2130,00 | 532,50 |
| 4. | Зем. участок, лот № 5 | 21:11:0:448 | Чувашская Республика, Канашский район, участок находится в 350 м по направлению на восток от д. 19 по ул. Кооперативная в д. Ближние Сормы | 316762,0 | 8200,00 | 1640,00 | 410,00 |

К участию на торгах допускаются юридические и крестьянские (фермерские) хозяйства. Категория земель - земли сельскохозяйственного назначения.
Торги состоятся 30 июня 2014 года в 10.00 часов в здании администрации Кошноруйского сельского поселения Канашского района по адресу: Канашский район, д. Кошноруй, ул. Ленина, д. 35.
Последний срок приема заявок для участия на торгах 25 июня 2014 года до 17 часов.
Телефон для справок: 67-4-43.

Факс: /8352/ 28-83-70.
E-mail:hypar2008@rambler.ru
реклама пĕлтерӳ
Тел.: 28-83-70.
316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ.

СТРОИТЕЛЬНАЯ КОМПАНИЯ ЦЕНТР
БЕТОН РАСТВОР ДОСТАВКА
г. Чебоксары, ул.Пристанционная, 7
(8352) 76-56-00, 63-80-08

www.profilch.ru
ПРОФНАСТИЛ СОБСТВЕННОЕ ПРОИЗВОДСТВО
ангары, КОМПЛЕКТУЮЩИЕ ДЛЯ КРОВЛИ, ВОДОСТОКИ, ДЫМНИКИ
МОНТАЖ ЗАБОРОВ
тел. (8352) 22-95-45, 63-82-85

ООО"Мобильный бетон"
БЕТОН РАСТВОР ДОСТАВКА
г. Чебоксары,Эгерский б-р,49
(8352) 51-22-27, 67-73-57

## УСЛУГИ

**32.Наркология. Живите трезво!** Анонимно. Консультация бесплатно. С 8 до 13 ч. А.: Чеб., пр. Ленина, 56. **Т. 552733.** *Лиц. ЛО 2101000928 МЗ СР РФ от 13.09.13 г. Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

**51.Бурение** колодцев, скважин; **кольца колодезные** высококачественные. Доставка. Т.: 89278477143, 89373790080.

**152.Бурение скважин на воду.** Т. 8-960-302-12-93.

**160.Бурение колодцев,** углубление; **продажа и д-ка** ж/б колец. bur21.ru Т. 8-905-343-42-07.

**229.Кровля, обшивка домов.** Гарантия. **Скидки.** Т. 8-927-668-75-74.

231.Установка **заборов, ворот, свай** винтовых, **обшивка** сайдингом. Т. 299-788, 8-917-650-06-40.

**250.Кровельные, фасадные работы**. Монтаж водостоков. Гарантия. Качество. Т. 8-903-322-04-79.

**273.Бурение скважин** на воду до 50 м. Т. 89063816037.

**302.Бурение скважин на воду.** Опыт. Гарантия. Скидки. Т. 8-962-321-81-19, 21-81-19.

**330.Бурение скважин** на воду. Т. 89063871363, Владимир.

**339.Бурение скважин** на воду. Т. 8-919-663-77-46.

**346.Бурение скважин** на воду. Гарантия. Т. 364060.

**359.Бурение колодцев. Продажа** колодезных колец. Доставка и установка. Т. 89033790901.

**360.Компьютерная помощь.** Недорого. Т. 8-917-660-53-05.

**367.Печник-профессионал.** Т. 89278629485.

## РАЗНОЕ

**338.Ищу единомышленника** от 53 л. для совместного проживания в деревне. Т. 8-937-370-43-03.

## СУТАТĂП

**168.**Лайăх кĕрекен **тап-тарнă çăм.** Т. 89170664146.

**363.Сăвакан ăратлă качака** – Шупашкар р-че. Т. 8-987-738-45-60.

**364.Хурт-хăмăр вĕллисемпе** – Комсомольскинче. Т. 89613429059.

## ПРОДАЮ

**1.Качественную** фабричную **МЕБЕЛЬ** по доступным ценам: стенки от 7900 р., прихожие от 3600 р., шкафы от 3300 р., комоды от 2300 р., столы от 1000 р., кровати от 4000 р. **Доставка,** сборка. Скидки, рассрочка. Салоны «Express Комфорт»: м-н «Экспресс»; вещ. рынок «Ярмарка»; МТВ-Центр – 4-й эт.; «Северная» ярмарка. **Сайт:** www.ex-comfort.ru. Т.: 46-55-44, 89538998224.

**4.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка – бесплатно. **Т. 89875766562.**

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х-20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого; цемент, песок. Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**6.Песок,** гравмассу, чернозём, **торф,** щебень, **бой кирпича** с доставкой. Т. 8-903-346-07-13.

**8.Гравмассу, песок,** щебень, **торф,** кирп. бой, **керамблок,** керамзит. Пенсионерам, уч. ВОВ скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**9.Гравмассу, песок,** щебень, керамзит, **навоз, чернозём.** Дешево. Д-ка. Т. 89033583021, 443021.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил, гвозди,** столбы, проволоку. **Изготовление** ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**11.Гравмассу, песок,** щебень, керамзит, **чернозём, навоз.** Дешево. Доставка. Т. 89276689713.

**12.Профнастил,** металлочерепицу, **оцинковку** рул., листовую, **трубы** профильные, водостоки, металлосайдинг. Т. 444433.

**15.Кирпич** – любой, брусчатку, **кольца,** ОПГС, КБ. **Т. 89613393363.**

**16.СЕТКУ-РАБИЦУ** от производителя – чёрную, зелёную, оцинкованную – около 100 видов, **сетку сварную,** столбы, скобы, проволоку, калитки. Доставка. Без выходных. Т.: 683045, 8-937-952-22-11.

**19.Гравмассу, песок, керамзит, щебень.** Д-ка. Т. 8-903-322-57-66.

**20.Сетку-рабицу,** ворота, калитки, заборы; **кровля,** обшивка домов, навесы. Д-ка. Установка. Пенсионерам **скидки.** Т.: 89022881447, 38-75-74, metalservis21.ru

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 8-903-345-63-07, 8-917-675-75-28.

**22.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Замер, доставка – бесплатно. Без выходных. Т.: 89176529694, 89276679588.

**23.Гравмассу, песок,** бой кирпича, **щебень.** Д-ка. Т. 89061355241.

**24.ГРАБЛИ,** косилки, **сажалки,** копалки, окучники, **опрыскиватели.** Доставка. Т. 89278533596.

**28.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Замер. Доставка – бесплатно. Скидки. Без выходных. **Т. 89370101054.**

**29.Керамблок, кирпич.** Т. 37-83-78.

**30.ОКНА** от 5900 руб. **Москитная сетка** – в подарок. **Акция** действует до конца месяца. Предложение ограничено. Звоните по тел. 8-937-954-92-45.

**33.Гравмассу, песок,** щебень, **керамзит.** Д-ка. Т. 89053465671.

**35.Блоки керамзитобетонные** от производителя. Высокое качество. Низкие цены. Доставка. Документы. Т. 89373866629.

**38.Брусчатку, плиты тротуарные.** Огромный ассортимент. Укладка. Т. 89674702736.

**42.Керамблоки** 12х20х40, 20х20х40, **кольца** колодезные – диам. 1,5м; 1м; 0,8м; 0,7м; 0,45м. Доставка. **Бурение.** Т.: 8-987-666-41-40, 89370100141.

**45.АКЦИЯ! БЛОКИ** КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ 20х20х40 – **33** руб., 9х20х40, 12х20х40; **кольца** колодезные всех размеров от производителя, по низким ценам – бурение, монтаж; песок, гравмассу, щебень, торф, навоз, чернозём, КИРПИЧ в ассортименте. Д-ка. Т. 89196543499. Звоните!

**47.Керамблоки** 12х20х40, 20х20х40 от производителя, **цемент М-500.** Т.: 489277, 89033899038.

**48.Керамблоки,** кольца колодезные; всё для **фундамента** – ФБС, бой кирп., бетона, свая, ОПГС, песок. Д-ка. Т. 89063814420.

**49.Керамблоки, цемент, керамзит** в мешках. Цены от производителя. Т. 89053447932.

**53.Отруби, зерно, к/корм,** сахар, муку. Доставка. Т. 89373916016.

**58.Гравмассу,** щебень, песок, **керамзит,** бетон, **чернозём, навоз.** Д-ка. Недорого. Т. 89276687015.

**59.СЕМЕНА кормовой свеклы "ЛАДА"** высокой репродукции. Тел.: 8/8352/ 73-39-11, 55-44-70, 89613463834.

**60.СЕМЕНА** высокоурожайных **трав для сенокоса** и др. Тел.: 8/8352/ 73-39-11, 75-80-34, 55-44-70, 89613463834.

**61.БЛОКИ керамзитобетонные** от производителя. Гарантируем высокое **качество.** Низкие цены. Доставка. Т. 89876734754.

**66.Заборы** кованые. Т. 89276689587.

**71.ПИЛОМАТЕРИАЛ** любой, **срубы** в наличии и на заказ, **дрова,** горбыль. Т. 8-903-389-14-00.

➢ Блоки керамзитобетонные - 38 руб. (1шт.)
➢ БЕТОН М200 по цене 3000 руб. (за 1м³)
➢ Раствор М100 - 2400 руб. (за 1м³)
➢ Блоки фундаментные ФБС 12.4.6 - 783 руб. (1шт.)
➢ Кольца колодезные 0.7, 1.0, 1.5, 2.0 м., крышки к ним, плиты перекрытия, перемычки
Блоки слоеные. Возможна доставка.
ЖБК№9
Тел.: 44-49-00 63-10-95

## П Р О Д А Ю

**73.ПРОФНАСТИЛ, металлочерепицу, сайдинг,** водостоки. Скидки. Замер. Доставка. Монтаж. Т. 89033220479.

**75. Дымоходные трубы** из нерж. стали. **Аргонная сварка:** медь, нержавейка. Т. 44-44-33.

**76.СРУБЫ** с комплектацией. **Липовые срубы** – на заказ. Доставка. Т. 8-937-952-84-67, Владимир.

**77.ТЕПЛИЦЫ: 3х6** – 12000 р., **3х8** – 15000 р. Доставка. Т. 48-16-54.

**79.Прицеп мотоблока, мини-трактора.** Т. 8-905-344-47-35.

**103.Керамблок, кирпич, кольца.** Качественные. Д-ка. Т. 21-36-80.

**117.ОКНА ЧУВАШИИ.** Пластиковые **окна**, железные **двери.** Замер. Монтаж. Скидки.Т. 89050281182.



**126.Теплицы** из поликарбоната: 3х4, 3х6, 3х8, 3х10 – в наличии. Доставка по ЧР. Т. 8/8352/ 48-08-23.

**128. Пластиковые ОКНА,** деревянные. Бесплатно: замер, доставка, демонтаж. **Гарантия** 5 лет. **Скидки.** Т. 8-937-391-39-91.

**134.Кирпич, керамблок.** Заводские цены. Д-ка манипул. Т. 447353.

**157.**Пластиковые **ОКНА,** стальные **ДВЕРИ.** Дёшево. Т. 89276689303.

**158.ОКНА, ДВЕРИ "БАРС".** Заводское производство. Бесплатный замер. Рассрочка. Гарантия 10 лет. Скидки. Т. 8-927-668-93-03.

**172.Гравмассу, керамблок, песок, щебень.** Д-ка. Т. 89023277585.

**224.Пчелосемьи, улья,** мёд, готовые **рамки.** Тел. 89003303090.

**230.Бетон, раствор,** фундаментные **блоки.** Доставка по Чувашии. Т.: 89373918648, 89278535732.

**238.Бетон, керамблоки, радиаторы.** Доставка. Тел. 67-14-22.

**249.БРУСЧАТКУ, плитку** тротуарную, **керамзит,** песок в мешках. Замер. Доставка. Укладка. Т.: 8-903-322-04-79, 8-903-358-06-79.

**253.КВАДРОЦИКЛ** новый, бензиновый – 35000 руб. Т. 8-927-668-98-39.

**261.Песок, гравмассу, торф,** щебень, **чернозём.** Тел. 38-40-22.

**294.Песок, гравмассу,** щебень, бой кирпича. **Услуги КамАЗа.** Тел. 89053419146.

**299.Грабли, косилки, ШПАГАТ.** Доставка! Тел. 8-937-388-50-89.

**304.ПОНИ.** Т. 89279988227.

**308.Гравмассу, щебень, к/б блоки.** Доставка. Т. 89278462410.

**316.Гравмассу,** песок, **керамзит,** щебень, бой кирпича, **к/б блоки.** Доставка. Т. 89051974019.

**323. Песок** карьерный, речной; **гравмассу,** щебень, **керамзит,** асфальтную крошку, **бетон,** раствор всех марок. Недорого. Т. 8-961-340-93-05.

**326.Гравмассу,** керамблоки, **песок,** керамзит, **щебень** – недорого. Доставка. Т. 89603128952.

**340.Песок,** ОПГС, **щебень,** асфальтную крошку, **торф, навоз;** вывоз мусора. Почасовая работа. Тел.: 89061326378, 484161.

**342.ПЧЕЛОСЕМЬИ** на 8 рамах **с расплодом.** Цена договорная. Тел. 89176572588.

**351.Пчелосемьи, улья, мёд.** Тел. 8-905-343-62-02.

**353.Песок, ОПГС, щебень.** Услуги КамАЗа. Т. 8-903-379-04-06.

**354.Пчелосемьи.** Т. 89176534903.

**355.Песок, гравмассу, щебень.** Доставка. Т. 89053479783.

**361.Песок, щебень, гравмассу** - от 5 до 30 тн. в короткие сроки. Недорого. Т.: 89876701442, 89176787166.

**369.Гравмассу, песок** речной, карьерн., **щебень.** Т. 89520269954.

## КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров,** лошадей. Т. 89625994706.

**141.Коров, бычков и лошадей.** Т. 89030659909.

## РАБОТА

**110.Монолитчики,** плотники, **монтажники,** шлифовщики, **каменщики,** сварщики. Питание, спецодежда. Вахта. Т. 8-925-002-22-38.

**309.**Срочно **требуются мастера** отделочных работ. Соцпакет. Тел. 8-963-771-58-89.

**368.Требуются:** сварщики, монолитчики, арматурщики, монтажники, плотники, разнорабочие, каменщики. Проживание, питание предоставляются. Оформление по ТК, соцпакет. Тел. /8352/ 37-85-75 /«АльянсГрупп»/.

Спартакиада

# Çулĕсене кура мар хастар



*Пирĕн республикăри аслă ăру çыннисем çамрăксене сывă пурнăç йĕркине тытса пыма сăмахпа кăна мар, ĕçпе хавхалантарса пынине витĕмлĕн çирĕплетеççĕ. Çакă тивĕçлĕ канăва тухнисен хушшинче Раççей спартакиади ирттернинчен те лайăх курăнать.*

Асăннă мероприятин пĕрремĕш тапхăрĕ район-хулара ăнăçлă иртрĕ. Тупăшусенче çĕнтернисем вара спартакиадăн иккĕмĕш тапхăрне хутшăнма тивĕçлĕ пулчĕç. Нумаях пулмасть республикăри хуласемпе районсен пĕрлештернĕ ушкăнĕсем – пĕтĕмпе 25 команда – Йĕпреç поселокĕнчи «Спартак» стадиона пуçтарăнчĕç. Кунти спорт арени пенсионерсен тĕрлĕ енлĕ ăсталăхне тĕрĕслемелли вырăн пулса тăчĕ. Вĕсем çăмăл атлетика, шывра ишес, сĕтелçи теннисла, шахматла выляс, тĕл перес, аэробика тата ытти енĕпе тупăшрĕç. Чăваш Енĕн пур кĕтесĕнчен те килнĕ спорт ветеранĕсене ЧР физкультурăпа спорт министрĕ Сергей Мельников, РФ Федераци Канашĕн социаллă политика енĕпе ĕçлекен комитет ертӳçин пулăшаканĕ Владимир Клоницкий, Йĕпреç район администрацийĕн пуçлăхĕ Николай Чугаров, Раççей Пенсионерсен союзĕн республикăри уйрăмĕн ертӳçи Валерий Сапожников тата РФ Пенси фончĕн Чăваш Енри уйрăмĕн управляющийĕн çумĕ Валерий Николаев саламларĕç.

Кĕçех атлетсем старта тухрĕç. Арçынсем – 400, хĕрарăмсем 20 0 метрлă дистанцисенче тупăшрĕç. Çăмăллăн та вăр-варрăн чупакансене пĕрре те ветерансен йышне кĕртес килмест. Стадионти пĕр çаврăма пуринчен те малтан Касал тăрăхĕнчи Анатолий Давыдов чупса тухрĕ. Ку çемьере спорт хăйĕн вырăнне тупнине унăн йăмăкĕ Галина та чи лайăх вăхăтпа финиша çитни те çирĕплетрĕ. Шел те, пĕтĕмĕшле кăтартусемпе Комсомольскисен команди çăмăл атлетика енĕпе виççĕмĕш вырăнта кăна, Елчĕксемпе Хĕрлĕ Чутайсем вĕсене хыçа хăварчĕç.

Шывра ишекенсене «Патвар» спорт комплексĕ йышăнчĕ. 50 метрлă дистанцире Йĕпреçре пурăнакан Владимир Васильева çитекенни тупăнмарĕ. Хĕрарăмсенчен /вĕсем 25 метра ишсе тупăшрĕç/ Шупашкарти Фрида Кузнецова çĕнтерчĕ. Сĕтелçи теннисла вылякансен хушшинче те çивĕч кĕрешӳ иртрĕ. Турнирта Сергей Юрьевпа Людмила Федорова мала тухрĕç. Сергей Крупнов /Сĕнтĕрвăрри районĕ/ тата Роза Алексеева /Шупашкар/ тĕл перекенсен ăмăртăвĕнче ыттисенчен ытларах очко пухрĕç. Шупашкар хулинчен килнĕ шахматçăсем пурне те çĕнтерсе спартакиада дипломне тивĕçрĕç. Çĕмĕрле хулинчи хĕрарăмсем аэробика енĕпе, Красноармейски районĕн туслă команди хутăш эстафетăра ыттисенчен çаврăнăçуллăрах та вăр-вартарах пулчĕç.

Спартакиада пĕтĕмлетĕвĕпе Шупашкар хулин команди республика тапхăрĕн çĕнтерӳçи пулса тăчĕ. Иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсенче – Çĕнĕ Шупашкарсем тата Шупашкар районĕн команди. Чемпионсем спартакиадăн çĕр-шыври тапхăрĕнче Чăваш Ен чысне хӳтĕлĕç. Ăмăрту пирĕн республикăн тĕп хулинче утă уйăхĕн 10-12-мĕшĕсенче иртĕ.

■ **Геннадий КУЗНЕЦОВ**

# Çиччĕри хĕр ачан пĕрремĕш кĕнеки





*Ача-пăча валли çырнă кирек мĕнле кĕнеке те кăсăклă вуланать. Унпа "вĕттисем" кăна мар, аслисем те хаваспах паллашаççĕ. "Чун çимĕçне" хайлаканĕ хăй те ача та – апла ку кĕнекене канфетпах танлаштармалла.*

Çак кунсенче Чăваш кĕнеке издательствинче Александра Сапожниковăн "Приключения Конфетки и Печеньки" кĕнеки пичетленсе тухнă. Юмах авторĕ çичĕ çулта кăна-ха. Пăрчăкан пек çивĕч те вăр-вар, хаваслă хĕр ача Шупашкарти 43-мĕш шкулта 1-мĕш класс пĕтерет. Александра пултарулăхпа тавра курăма аталантаракан тĕрлĕ кружока çӳрет, воспитательсемпе педагогсене хăйĕн шухăшлавĕпе, ăсталăхĕпе тĕлĕнтерет. Пĕррехинче вăл икĕ хĕр тус – Конфеткăпа Печенька – пирки юмах шухăшласа кăларать. Кружок ертӳçисене питĕ килĕшнĕ вăл. Вĕсем Сашăн ашшĕне амăшне кĕнеке кăларма сĕнеççĕ.

Кĕнекене чăн малтан хĕр ачан аслашшĕпе асламăшĕ вуланă, мăнукĕн пултарулăхне пысăк хак панă. Кĕнекене С.А.Бритвина художница ӳкерсе илем кӳреççĕ. Хăйĕн ӳкерчĕкĕсенче вăл авторăн кăмăлтуйăмне аван уçма пултарнă. Шкул çулне çитмен тата кĕçĕн класра вĕренекенсем валли кăларнă кĕнеке 1000 экземплярпа кун çути курнă.

Юмахра та пурнăçри пекех йывăрлăхсем тĕл пулаççĕ. Шкул ачин произведенинче хăюллă паттăрсем те, усаллкасем те, пысăк туслăх та пур. Туслă пулнипе, пĕр-пĕрне пулăшнипе кăна усала çĕнтерме пулать. Пĕчĕк вулакансене Александра Сапожниковăн "пылак" кĕнеки кăмăла килетех! Вулăр та туслă пулма вĕренĕр!

■ **Анна ГРОМОВА**

# Гороскоп

*Çу, 26 – çĕртме, 1*

**Сурăх.** Ытларах канма тăрăшăр! Çăлтăрсем палăртнă тăрăх – ку эрне пуç çĕклемесĕр ĕçлемелли мар. Унсăр пуçне сире мухтамалли сăлтавсем тупăнсах тăрĕç. Тунти кун çитĕнĕвĕрсемпе мăнаçланатăр, юн кун ачăрсен ӳсĕмĕсемшĕн хĕпĕртетĕр. Эрне кун вара çĕнĕ ĕçе кӳлĕнме тивĕ. Тӳрех палăртар: вăл пĕрре те çăмăл мар.

**Вăкăр.** Кил-тĕрĕшре аппаланатăр – çакă сире киленĕç кӳрĕ. Сĕтел-пукана, шкапсене куçарса лартатăр, сывăрмалли тата хăнасене йышăнмалли пӳлĕмсем валли çĕнĕ диван-кравать туянатăр. Юратнă ĕçĕрпе тăрмашни те хăпартлантарĕ. Тутлă апат пĕçерес килет-и, вĕтĕ шăрçапа тĕрлемешкĕн кăмăл пур-и – тархасшăн. Сăмах май, çакă пăшăрханнине иртерме те пулăшĕ.

**Йĕкĕреш.** Ĕç пирки кăна шухăшлăр! Çине тăрса вăй хуни, пысăк çитĕнӳсемпе палăрни карьера картлашкипе хăпарма пулăшĕ. Канмалли кунсем хыççăн çанă тавăрса тăрăшма çăмăлах мар пулмĕ те тунти кунпа ытлари кун пуçарулăх кăтартăр, шухăшăрпа ĕçтешĕрсене паллаштарăр.

**Рак.** Умра – икĕ çул! Пĕри аякри хулана илсе çитерĕ. Ахăртнех, эсир унта канма та май тупатăр. Çемье çавăрманнисен шăпа пӳрнине тĕл пулас шанăç пур – кĕçнерни кун иртен-çӳрене тимлĕ сăнăр. Иккĕмĕш çулĕ пысăк тупăш кӳрекен ĕç патне илсе çитерĕ, анчах унта карьера картлашкипе хăпарма çăмăл пулмĕ. Хăшне суйласси хăвăртан килет. Чи кирли – асăрханулă пулни.

**Арăслан.** Çăмăл мар тапхăра тӳссе ирттеретĕр. Кăткăс ыйтусене хуравлама, вăл е ку ĕçе, япалана суйланă чухне иккĕленме тивĕ. Çул çинче, документсем пухнă чухне, аслисемпе калаçнă вăхăтра асăрханулла пулни пăсмĕ – сăмах çерçи мар, вĕçсе тухсан тытаймăр. Унсăр пуçне отпуска ăçта ирттересси пирки шухăшлăр.

**Хĕр.** Япăх мар эрне. Анчах çемьери лару-тăру кăткăсланни ĕнсене хыçтармаллипех хыçтарĕ. Çăлтăрсем урăххисене асăрхаманнипе-хӳтĕленипе çыхăннă-ши – савнийăр /мăшăрăр/ сире пачах та ăнланмасть. Шухăшĕ тĕрĕс мар пулин те хăйĕннех перет, парăнма шухăшламасть. Чи йывăррисем – эрне кунпа шăмат кун.

**Тараса.** Кĕтмен, анчах кăмăллă тĕл пулу савăнтарĕ /тунти кун/. Унсăр пуçне тахçантанпах туянма палăртнă çи-пуçа, йăла техникине илетĕр /ытлари кун/. Хăшĕ-пĕрин çурт е пӳлĕмхваттер туянма май пулĕ. Ырă кăмăллă çынпа паллашни те /эрне кун/ çунатлантарĕ. Канмалли кунсенче вара ывăннине юратнă çыннăрпа пĕрле ирттерме тӳр килĕ.

**Скорпион.** Ахăртнех, сирĕн канас килет... Анчах, шел те, май килмĕ. Çăлтăрсем килти тата ĕçри лару-тăрăва тимлĕ сăнама сĕнеççĕ. Ĕçтешĕрсенчен пĕри пысăк йăнăш тăвас хăрушлăх пур /тунти кун/, ачăрсем харсăрланĕç /эрне кун/, юратнă çыннăр эсир ыйтнине пурнăçа кĕртĕ /вырсарни кун/, анчах каярахпа пăтăрмах сиксе тухĕ.

**Ухăçă.** Укса-тенкĕ тăкаклас килет-и? Ку пĕрре те япăх мар. Мĕншĕн тесен тахçантанпах илме палăртнă япаласене, çи-пуçа йӳнĕ хакпа туянма май пулĕ – тунти кунпа кĕçнерни кун суту-илӳшĕн уйрăмах ăнăçлă. Кĕçех ачăрсен çуллахи каникул пуçланĕ. Тен, вĕсем валли ăçта та пулин канма каймашкăн путевка туянмалла?

**Ту качаки.** Çăлтăрсем сире ку эрнере кахалланма ирĕк параççĕ. Ĕç нумай теейĕмĕн, пурри те васкавлă пурнăçламалли мар. Çавăнпа юлташăрсемпе тĕл пулăр /тунти кунпа ытлари кун/, сывăх çыннăрсене тутлă апат-çимĕçпе сăйлăр, курава, кинотеатра çитсе килме тăрăшăр /юн кунпа эрне кун/, ытларах çывăрăр.

**Шыв тăкан.** Эрне пуçламăшĕнчех йывăрлăхсене парăнтарма тивĕ, вĕсенчен пăрăнса иртес тесен пуçăра ан усăр /тунти кун-юн кун/. Хăвăра япăх туйни те ахальтен мар, çавăнпах пĕр ĕç патне те алă пымĕ. Эрнен иккĕмĕш çуррине те пысăк ĕçсем пурнăçлама ан палăртăр – май пулмĕ.

**Пулăсем.** Кăмăлли те, япăххи те пур. Чи лайăххи – ырă чунлă, ăшă кăмăллă çынпа паллашни. Начарри – укçа-тенкĕпе çыхăннă ыйтусене татса пама тивни. Тен, икĕ çак пулăм пĕр-пĕринпе çыхăннă? Канмалли кунсене çемйĕрпе ирттерĕр. Отпуска халĕ те кайман-и? Ыйту çырса парăр.

## Çанталăк



кăнтăрла çĕрле

| | | |
| --- | --- | --- |
| 24.05 | + 27 | + 14 |
| 25.05 | + 28 | + 18 |
| 26.05 | + 24 | + 18 |
| 27.05 | + 26 | + 14 |
| 28.05 | + 17 | + 11 |
| 29.05 | + 14 | + 10 |
| 30.05 | + 16 | + 6 |


чăваш халăх хаçачĕ

ХЫПАР

ЗОЛОТОЙ ФОНД ПРЕССЫ MMVIII

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ – ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН МИНИСТРСЕН КАБИНЕЧĔ, "ХЫПАР" ХАÇАТ РЕДАКЦИЙĔ

Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийĕнче 2013 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрациленĕ

"Хыпар" индексĕ – 54800, "Хыпар"-шăмат кун"– 78353, "Çамрăксен хаçачĕ" – 54804, "Чăваш хĕрарăмĕ" – 11515, "Сывлăх" – 11524, "Кил-çурт, хушма хуçалăх" – 54806

Директор-тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ

Номер редакторĕ М.М.АРЛАНОВ

РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ-коммерци директорĕ/
А.П.ЛЕОНТЬЕВ /директор-тĕп редактор/
Г.А.МАКСИМОВ /тĕп редактор çумĕ/
С.Л.ПАВЛОВ /тĕп редактор çумĕ/
Н.Г.СМИРНОВА /культурăпа чăваш диаспорин пайĕн редакторĕ/
Ф.П.ЧЕРНОВ /яваплă секретарь-техника центрĕн пуçлăхĕ/

Дежурнăй редактор Р.А.ВЛАСОВА

Адрес: 428019, ШУПАШКАР, ИВАН ЯКОВЛЕВ ПРОСПЕКЧĔ, 13, ПИЧЕТ ÇУРЧĔ, III ХУТ, "ХЫПАР".

ТЕЛЕФОНСЕМ

Редакци телефонĕсем:
56-00-67 – директор-тĕп редактор
56-33-64 – тĕп редактор çумĕ
56-04-17 – тĕп редактор çумĕ
62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ
56-05-21 – журналист тĕпчевĕсен тата куçару пайĕ
56-08-62 – экономика пайĕ
56-03-04, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вĕренӳ пайĕ
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ
56-04-26, 28-85-87 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ
28-82-91 – корректорсем
56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64

коммерци дирекцийĕ,
28-83-70 – рекламăпа пĕлтерӳсен пайĕ
56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайĕ, hypar2008@rambler.ru

корр. пункчĕсем:
8-937-398-75-33 – Хĕрлĕ Чутай
/8-835-38/2-18-02, 2-11-95–Йĕпреç
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ

Факс: (8352) 28-83-70
Электрон почта: hypar@mail.ru

Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ,13. 56-00-23 – издательство директорĕ.



РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРӲСЕНЕ 316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.

Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн "Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", "Самана таппи", "Компетентлă" рубрикăсенче пичетленеççĕ.



Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи. Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.

Тираж 8463. Заказ 1859 .

Ĕç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.